Р1
К4-56
23805-чув

А. П. ЧЕХОВ

# ЧИЕ САЧĔ

4 пайлă комеди

А. П. ЧЕХОВ

# ВИШНЕВЫЙ САД

КОМЕДИЯ В
4 ДЕЙСТВИЯХ

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
ЧЕБОКСАРЫ ◆ 1941

Кор
Р1
Ч-56

А. П. ЧЕХОВ

# ЧИЕ САЧĔ

4 ПАЙЛĂ КОМЕДИ

В. АЛАГЕР куçарнĭ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

a 8/46885

БССР
Дзяржбібліятэка
імя В. І. Леніна
№ 21601

М 23805 - ЧУВ

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

## ПЬЕСĂРИ ÇЫНСЕМ:

**Раневская, Любовь Андреевна,** помещица.
**Аня,** унăн хĕрĕ, 17 çулта.
**Варя,** унăн усрав хĕрĕ, 22 çулта.
**Гаев, Леонид Андреевич,** Раневская пиччĕшĕ.
**Лопахин, Ермолай Алексеевич,** купец.
**Трофимов, Петр Сергеевич,** студент.
**Симеонов-Пищик, Борис Борисович,** помещик.
**Шарлотта Ивановна,** гувернантка.
**Епиходов, Семен Пантелеевич,** конторщик.
**Дуняша,** горничная.
**Фирс,** лакей, 87 çулхи старик.
**Иртен-çӳрен.**
**Станци начальникĕ.**
**Почта чиновникĕ.**
**Хăнасем, тарçăсем.**

Ĕçсем **Л. А.** Раневская именийĕнче пулса иртеççĕ.

# ПĔРРЕМĔШ ПАЙЕ

Халичченех ачасен пӳлĕмĕ хисепĕнче тăракан пӳлĕм. Алăксенчен пĕри Аня пӳлĕмне илсе кĕрет. Тул çутăлнă, кĕçех хĕвел тухать. Май уйăхĕ, чие йăвăççисем чечеке ларнă, анчах садра сивĕ, тăм ӳкнĕ. Пӳлĕмри чӳречесене хупнă. **Дуняша**—çуртапа, тата **Лопахин**—аллине кĕнеке тытса, кĕреççĕ.

Лопахин. Поезд килчĕ, тавтапуç турра. Миçе сехет?

Дуняша. Кĕçех иккĕ çитет. (*Çуртине сӳнтерет*). Тул çутăлчĕ.

Лопахин. Мĕн чухлĕ кая юлса килчĕ-ха поезд? Сахалран та пĕр-икĕ сехете юлчĕ. (*Çăварне карса карăнкалать*). Хам та пит аван çав, мĕн ухмахлантăм ĕнтĕ! Станцире кĕтсе илес тесе юриех килтĕм кунта, çывăрнă юлнă... Ларнă çĕртех çывăрса кайнă. Тарăхас килет... Сан вăратасчĕ хăть мана.

Дуняша. Эпĕ сире кайнă тесе. (*Итлет*). Авă, килеççĕ пулас ĕнтĕ.

Лопахин (*итлет*). Çук пуль-ха... Багаж илмелле-ха вĕсен, тата мĕн те пулин. (*Пауза*). Любовь Андреевна ют çĕршывра пилĕк çул

пуранса ирттерчĕ, пĕлместĕп, халь мĕнле пулса кайнă-ши вăл... аван çын вăл. Çамăл, уçă кăмăллă çын. Астăватăп, ача чухнех-ха вăл, эпĕ ун чухне пĕр вунпилĕк çулхи ачаччĕ ĕнтĕ, атте мана,—вăл ун чухне кунта, ялти лавкара суту-илӳ тăватчĕ,—питрен чышрĕ те, ман сăмсаран юн анчĕ... Эпир ун чухне, тем тума-çке-ха, килкартине пĕрле пынăччĕ, вăл кăшт сыпнăччĕ. Любовь Андреевна мана, хальхи пекех астăватăп, ун чухне вăл çамрăкчĕ-ха, пит çинçешкеччĕ, пит çумалли патне илсе пычĕ те, шăп ак çак пӳлĕмре, ачасен пӳлĕмĕнче эпир... „Ан макăр, мужичок,—тет,—авланиччен тӳрленет", тет... (*Пауза*). Мужичок. Атте ман, чăнах ĕнтĕ, мужик пулнă, эп акă, шурă жилет, сарă пушмак тăхăннă. Сысна сăмсипе кулач сутнă çĕре пырса кĕнĕ пек... Анчах пуянни пуян ĕнтĕ, укçа нумай, ешĕл шухăшласа пăхас-тăк, тĕпне-йĕрне шыраса тупас-тăк, мужик-тĕк мужик ĕнтĕ... (*Алри кĕнекине уçкалать*). Кĕнеке вуласа тухрăм акă, анчах нимĕн те ăнланаймарăм. Вуланă çĕртех сыврăса кайнă. (*Пауза*).

Д у н я ш а. Йытăсем çĕрĕпе сывăрмарĕç,—сисеççĕ хуçисем килессе.

Л о п а х и н. Мĕн эсĕ, Дуняша, мĕн пулнă сана?..

Д у н я ш а. Алăсем чĕтреççĕ. Ăнсăр пулса ӳкеп.

Лопахин. Ытла ачаш ҫав эс, Дуняша. Тумланассине те, улпут хӗрӗ пек тумланан, ҫӳҫ-пуҫна та якатнӑ ав. Юрамасть апла. Хӑв камне астӑвас пулать.

Епиходов букет тытса кӗрет; вӑл пиншакпа, ҫап-ҫутӑ сӑран атӑпа, унӑн атти хытӑ чӗриклетет; кӗрсенех, вӑл аллинчи букетне ӳкерет.

Епиходов (*букетне ҫӗртен илет*). Акӑ, садовник парса ячӗ, столовӑя лартма, тет. (*Букетне Дуняшӑна парать*).

Лопахин. Квас илсе килсе паран мана.

Дуняша. Итлетӗп. (*Каять*).

Епиходов. Халь ир акӑ, виҫӗ градус сивӗ тӑрать, анчах чие йӑвӑҫҫисем чечекре. Ырлама пултараймастӑп хамӑр ҫанталӑка. (*Ассӑн сывлать*). Ҫук, пултараймастӑп. Пирӗн ҫанталӑк кирлӗ пек тытӑнса тӑма пултараймасть. Ак эпӗ, Ермолай Алексеич, каласа парам-ха сире, виҫӗмкун хама валли сӑран атӑ илтӗм,— вӗсем пур, ӗнентерсех калама хӑям-ха сире, ытла хытӑ чӗриклетеҫҫӗ, чӑтма ҫук. Мӗнпе сӗрмелле-ши?

Лопахин. Ан сыпҫӑн. Йӑлӑхтартӑн.

Епиходов. Ман тӗллӗн кашни кун пӗр-пӗр инкек килсе тухать. Анчах эп ӳпкелешместӗп, хӑнӑхса ҫитрӗм ӗнтӗ, кулкаласа илкелеп ҫитменне.

Дуняша кӗрет, Лопахина квас парать.

Епиходов. Каям-ха эпĕ. (*Пукан çумне пырса тăрăнать, пуканĕ ӳкет*). Вот... (*Хавасланнă пек пулса*). Куратăр-и акă, каçарăрсам сăмахăмшăн, епле пулса тăчĕ, ытахальрен калас-тăк... Ку ĕнтĕ, пит чаплă пулса тухрĕ! (*Каять*).

Дуняша. Мана, Ермолай Алексеич, тӳррипех калам-ха сире, Епиходов качча пыма ыйтать.

Лопахин. А!

Дуняша. Пĕлместĕп ĕнтĕ, темле... çынни вăл лăпкă, анчах тепĕр чух калаçма пуçлать те вара, нимĕн те ăнланма çук. Калассине аван калать, чĕре патне пымалла калать, анчах ăнланма çук. Килĕшнĕ пек те туйăнать вăл мана. Вăл мана питĕ юратать. Телейсĕр çын вăл, кашни кун мĕн те пулин пулать ăна. Витлессе те çапла витлеççĕ ăна кунта: çирĕм икĕ инкек, теççĕ...

Лопахин (*итлет*). Акă, килеççĕ пулас...

Дуняша. Килеççĕ. Мĕн чĕмери пулчĕ-ха мана... Йăлт сивĕнсе кайрăм.

Лопахин. Чăнахах та килеççĕ. Айта хирĕç каяр. Паллĕ-ши вăл мана? Пилĕк çул курман вĕт.

Дуняша (*пăлханать*). Халех ӳкетĕп... Ах, ӳкетĕп!

Пӳрт патнелле икĕ экипаж çывхарни илтĕнет. **Лопахинпа Дуняша** хăвăрт каяççĕ.

Сцена пушă. Сцена урлă, туя çине тайăнкаласа, Любовь Андреевнăна илме кайнă **Фирс** васкаса иртет; ун çийĕнче авалхи ливрей, çӳллĕ тăрăллă шĕлепке; вăл хăй ăссĕн темĕн калаçкаласа пырать, пĕр сăмахне те тавçăрса илме çук. Сцена хыçĕнче шав вăйланса пырать.—„Ак çакăнтан кайăпăр"... тенĕ сасă илтĕнет. Пĕчĕк сăнчăр вĕççĕн пĕчĕк йытă çавăтнă, çул çинче çӳремелли тумтирсем тăхăннă **Любовь Андреевна, Аня** тата **Шарлотта Ивановна** кĕреççĕ; вĕсем хыçĕнченех пальто тăхăннă тата тутăр çыхнă **Варя,** ун хыçĕнчен **Гаев, Симеонов-Пищик, Лопахин,** темĕн çыххипе зонтик йăтнă **Дуняша** тата япаласем çĕкленĕ тарçă-тĕрçĕсем кĕрсе—пурте пӳлĕм урлă каçса каяççĕ.

Аня. Айтăр кунтан. Астăватăн-и, анне, ак ку мĕнле пӳлĕм?

Любовь Андреевна (*савăнăçлăн, куççуль витĕр*). Ачасен пӳлĕмĕ!

Варя. Çав тери сивĕ, ман алăсем хытсах кайрĕç. (*Любовь Андреевнăна*). Сирĕн пӳлĕмсем халь те çав-çавах: шурри те, кĕренни те, ĕлĕкхи пекех, ним те улшăнман, анне.

Любовь Андреевна. Ачасен пӳлĕмĕ çав тери чипер, савнă хĕрĕм... Эпĕ кунта пĕчĕк чухне çывăрнă... (*Йĕрет*). Халь те эпĕ пĕчĕк чухнехи пекех... (*Малтан пиччĕшне, унтан Варяна чуптăвать, унтан каллех пиччĕшне*). Варя халь те ĕлĕкхи пекех, ним те улшăнман, халь те манашка пекрех. Ду-

няшкăна та палларăм... (*Дуняшкăна чуптă-вать*).

Гаев. Поезд икĕ сехет кая юлса килчĕ. Ку мĕн капла? Мĕнле йĕркесем-ши?

Шарлотта (*Пищике*). Ман йытă мăйăр та çиет.

Пищик (*тĕлĕнсе*). Шухăшлăр-ха эсир!

Аняпа Дуняшăсăр пуçне, пурте тухса каяççĕ.

Дуняша. Кĕтсе ывăнтăмăр эпир... (*Аня çийĕнчи пальтоне, шĕлепкине хывать*).

Аня. Эп çул çинче тăватă каç çывăрман... халь акă, çав тери шăнса кайрăм.

Дуняша. Эсир аслă типĕре тухса кайрăр, ун чухне юр çунăччĕ, сивĕччĕ, а халь акă? Савнă чунăм! (*Кулать, чуптăвать*). Кĕтсе ывăнтăм сире, савăнăçăм, çăлтăрăм... Халех каласа парам-ха сире, пĕр минут та чăтма пултараймастăп...

Аня (*сӳрĕккĕн*). Каллех мĕн те пулин...

Дуняша. Епиходов конторщик мана мăн-кун иртсен качча тухма ыйтрĕ.

Аня. Эсĕ ялан пĕр япала çинчен... (*Çӳçне тӳрлетсе*). Эп шпилькăсене йăлт çухатса пĕтертĕм... (*Вăл çав тери ывăннă, тайкала-наканах пулнă*).

Дуняша. Хам та пĕлместĕп ĕнтĕ, тем шухăшламалла. Вăл мана юратать, çав тери юратать.

Аня (*хӑй пӳлӗмне кӗмелли алӑк ҫине пӑхать, ачашшӑн*). Ман пӳлӗм, ман чӳречесем — хам ниҫта та кайман пекех туйӑнаҫҫӗ мана. Эпӗ килте! Ыран ирхине тӑратӑп та, сада чупатӑп... О, ҫывӑрса кайма пултарсанччӗ! Ҫул тӑршшӗпех ҫывӑрман вӗт эпӗ, канӑҫ ҫукки аптӑратса ҫитерчӗ.

Дуняша. Виҫӗмкун Петр Сергеич килчӗ.

Аня (*савӑнӑҫлӑн*). Петя!

Дуняша. Мунчара ҫывӑрать, пурӑнасса та унтах пурӑнать. Кансӗрлесрен хӑратӑп, тет. (*Хӑй ҫумӗнчи сехечӗ ҫине пӑхса*). Вӑратмаллаччӗ те ӑна, анчах Варвара Михайловна вӑратма хушмарӗ. Эсӗ ӑна ан вӑрат, тет.

**Варя** кӗрет, ун пилӗкӗнчи пиҫиххийӗ ҫинче ҫӑраҫҫи ҫыххи.

Варя. Дуняша, кофе хӑвӑртрах... Анне кофе ыйтать.

Дуняша. Халех. (*Каять*).

Варя. Тавтапуҫ турра, ҫаврӑнса килтӗр, эсӗ каллех килте акӑ. (*Ачашланса*). Чунӑм, ман чунӑм килчӗ! Чипер йӑмӑкӑм килчӗ!

Аня. Асап курса пӗтрӗм эпӗ.

Варя. Чухлатӑп ара!

Аня. Аслӑ типӗ эрнинче тухса кайрӑм, ун чухне сивӗччӗ. Шарлотта ҫул тӑршшӗпех калаҫса пырать, фокуссем тӑвать. Мӗн тума ҫыпӑҫтарса ятӑн эс ҫав Шарлоттӑна...

Варя. Пĕр пĕччен кăларса яма юрамасть вĕт-ха сана, чунăм. Эсĕ вĕт вунçиччĕре çеç!

Аня. Çитетпĕр Парижа, унта сивĕ, юр çунă. Французла эпĕ çав тери начар калаçатăп. Анне пилĕкмĕш хутра пурăнать, кĕретĕп ĕнтĕ ун патне,—ун патĕнче темле французсем, дамăсем, ватă патер, аллине кĕнеке тытнăскер,—табак туртса тултарнă, илемсĕр пӳлĕм. Ман сасартăк, аннене шеллес килсе кайрĕ, çав тери шел ĕнтĕ, эп ăна пуçĕнчен ыталаса илтĕм те, чăмăртаса тытрăм та, нимпле те вĕçерейместĕп. Кайран вара анне вĕçĕмсĕр ачашланчĕ, макăрчĕ...

Варя (*куççуль витĕр*). Ан та кала, ан кала...

Аня. Ментона патĕнчи дачине сутса ячĕ ĕнтĕ вăл, халĕ ĕнтĕ ун нимĕн те юлмарĕ, нимĕн те. Ман хамăн та пĕр пус та юлмарĕ, аран-аран çитрĕмĕр. Анне ăнланмасть. Вокзалта апат çиме ларатпăр та, вăл чи хаклă апатсене ыйтать, лакейсене тенкĕшер „на чай" парать. Шарлотта та çавах. Яша та хăйне валли порци ыйтать, хăрушла. Аннен лакейĕ Яша вĕт халь, эпир ăна кунта илсе килтĕмĕр...

Варя. Куртăм путсĕре.

Аня. Ну мĕнле? Процентсене тӳлерĕç-и?

Варя. Ăçта унта!

Аня. Турăçăм, турăçăм...

Варя. Августра имение сутмалла...

Аня. Турăçăм...

Лопахин (*алăкран пăхса мĕкĕрет*). Ме-е-е... (*Каять*).

Варя (*куççуль витĕр*). Такки парăттăм эп ăна пĕрре... (*Чышкипе юнать*).

Аня (*Варяна ыталаса, шăппăн*). Варя, вăл сана качча илеп тенĕ вĕт-ха? (*Варя вăл каланипе килĕшмесĕр пуçне пăркалать*). Юрататъ вĕт-ха вăл сана... Ма калаçса татăлмастăр эсир унпа? Мĕне кĕтетĕр?

Варя. Эпĕ çапла шухăшлатăп, нимĕн те тухас çук пирĕн. Ун ĕç нумай, ман çине пăхма вăхăт çук... çаврăнса та пăхмасть вăл ман çине. Пултăрах ĕнтĕ, ун çине пăхма та йăвăр мана... Пурте пирĕн туй çинчен калаçаççĕ, пурте саламлаççĕ, анчах, чăннипе, нимĕн те çук, йăлтах тĕлĕкри пек... (*Урăх тонпа*). Сан булавку темле пыл хурчĕ евĕрлех-çке.

Аня (*хурланса*). Кăна анне илсе пачĕ. (*Хăй пӳлĕмне каять, пĕчĕк ача пек савăнăçлăн калать*). Парижра эп сывлăш шарĕ çинче вĕçсе курнă!

Варя. Чунăм, ман чунăм килчĕ! Чипер йăмăкăм килчĕ!

Дуняша кофейник илсе кĕрет те кофе вĕретме пуçлать.

**Варя** (*алăк патĕнче тăрать*). Çŭретĕп те вара çапла, чунăм, кунĕпе килхушшинчи ăпăр-тапăра пуçтарса, шухăша каятăп. Сана пуян сынна качча парасчĕ, тетĕп, вара хама та пурăнма канăçлăрах пулĕччĕ, тетĕп. Каяттăм вара эп монастыре, унтан Киева... Мускава, çапла вара вĕçĕмсĕрех святой вырăнсем тăрăх çŭрĕттĕм... Çŭрĕттĕм те çŭрĕттĕм çапла. . Епле аван!..

**Аня.** Садра кайăксем юрлаççĕ. Миçе сехет-ши?

**Варя.** Виççĕмĕш пулмалла. Сана сывăрма вăхăт çитрĕ, чунăм. (*Анян пŭлĕмне кĕрсе*). Епле аван!

**Яша** кĕрет, вăл пледпа, çул çŭремелли сумкăпа.

**Яша** (*сцена урлă каçнă май*). Кунтан иртсе кайма юрать-и?

**Дуняша.** Паллама та çук сире, Яша. Епле пулса кайнă эсир Парижра.

**Яша.** Гм... Кам пулатăр çак эсир?

**Дуняша.** Эсир кунтан кайнă чухне, эп ак çакăн пекчĕ... (*Урайĕнчен кăшт çŭлерех тытса кăтартать*). Дуняша эпĕ, Федор Козоедов хĕрĕ. Астумастăр эсир!

**Яша.** Гм... Пĕчĕкçеç хăярăм! (*Çаврăнса пăхать те ăна ыталаса илет; вăл кăшкăрса ярать те чей чашкине ўкерет. Яша хăвăрт тухса каять*).

Варя (*алăкра, кăмăлсăр сасăпа*). Мĕн тата унта?

Дуняша (*куççуль витĕр*). Чей чашки çĕмĕрсе пăрахрăм...

Варя. Ку ырра систерет пуль-ха.

Аня (*хăй пÿлĕмĕнчен тухса*). Аннене систермеллеччĕ: Петя кунта...

Варя. Эп ăна вăратма хушмарăм.

Аня (*шухăша кайса*). Ултă çул ĕлĕкрех атте вилчĕ, тепĕр уйăхран çичĕ çулхи шăллăм, Гриша, шыва путса вилчĕ, питĕ чипер ачаччĕ. Анне чăтаймарĕ, кайрĕ, çаврăнса пăхмасăрах кайрĕ... (*Çÿçенсе илет*). Епле аван ăнланап эп ăна, пĕлсенччĕ вăл! (*Пауза*). Петя Трофимов Гришăна вĕрентетчĕ, вăл аса илтерме пултарать.

**Фирс** кĕрет; вăл пиджакпа, шурă жилетпа.

Фирс (*кофейник патне пырать, ĕçлĕ çын пек калать*). Барыня кунта апатланать... (*Шурă перчатка тăхăнать*). Кофе хатĕр-и? (*Дуняшăна хыттăн*). Эс тата! Хăйма ăçта?

Дуняша. Ах, турăçăм... (*Хăвăрт тухса каять*).

Фирс (*кофейник патĕнче аппаланать*). Эх, эсĕ те çав, айван... (*Хăй тĕллĕн мăкăртатать*). Парижран таврăнчĕç... Улпут та ĕлĕк Парижа кайнăччĕ... лашапа... (*Кулать*).

Варя. Мĕн çинчен калаçан çак эсĕ, Фирс?

Фирс. Мĕскер кирлĕ? (*Савăнăçлăн*). Барыня килчĕ ман! Кĕтсе илтĕм! Халь ĕнтĕ вилсен те юрать... (*Савăннипе макăрать*).

**Любовь Андреевна, Гаев, Симеонов-Пищик** кĕреççĕ; Симеонов-Пищик çӳхе сукнаран çĕлетнĕ поддевкăпа, шароварпа, Гаев кĕнĕ чухне аллисемпе, кĕлеткипе бильярдла вылянă чухнехи пек хускалусем тăвать.

Любовь Андреевна. Мĕнлеччĕ-ха вăл? Аса илем-ха... Саррине — кĕтессе! Дуплета — варрине!

Гаев. Кĕтесселле кастарап! Ĕлĕк чух эпир санпа, йăмăкăм, шăп çак пӳлĕмре çывăраттăмăр, халь ак эпĕ 51ç ула çитрĕм, тĕлĕнмелле...

Лопахин. Çапла-çке, вăхăт иртет.

Гаев. Кама?

Лопахин. Вăхăт иртет, тетĕп.

Гаев. Анчах кунта пачуля шăрши кĕрет.

Аня. Эпĕ çывăрма каятăп. Канлĕ çывăр, анне. (*Амăшне чуптăвать*).

Любовь Андреевна. Ытарма çук, хĕрĕм. (*Аня аллине чуптăвать*). Киле килнĕшĕн хĕпĕртерĕн пулать? Эпĕ ниепле те ăшчике лăплантараймастăп.

Аня. Сывă пул, кукки.

Гаев (*ăна питрен, аллисенчен чуптăвать*). Каях эппин. Каснă-лартнă анну пек

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
м 23805-чув

эсӗ! (*Йӑмӑкне*). Ун ҫулӗнче чухне эсӗ те, Люба, шӑп ҫакӑн пекчӗ ӗнтӗ.

**Аня Лопахинпа Пищике** алӑ парать те хӑй хыҫҫӑн алӑкне хупса тухса каять.

Любовь Андреевна. Пит ывӑннӑ вӑл.

Пищик. Ҫулӗ вӑрӑм ӗнтӗ.

Варя (*Лопахинпа Пищике*). Мӗн-ха, господа? Виҫҫӗмӗш сехет, чыса пӗлме те вӑхӑт.

Любовь Андреевна (*кулать*). Эс пӗртте улшӑнман, Варя, ӗлӗкхи пекех. (*Ӑна хӑй ҫумне тытса чуптӑвать*). Кофе ӗҫеп те акӑ, пурте кайӑпӑр вара. (*Фирс ӑна ури айне пӗчӗкҫеҫ минтер хурса парать*). Спасибо, тӑванӑм, эпӗ кофе ӗҫме вӗреннӗ. Кӑнтӑрла та, каҫпа та кофе ӗҫеп. Спасибо, старикӗм. (*Фирса чуптӑвать*)

Варя. Кайса пӑхам-ха, япаласене пурне те илсе килнӗ-и... (*Каять*).

Любовь Андреевна. Неушлӗ эпӗ ку? Эпех ларап-ши? (*Кулать*). Ман сиккелес, хӑлаҫланас килет. (*Аллисемпе питне хуплать*). Анчах эп ҫывӑрап пулсан! Эпӗ тӑван ҫӗршыва юрататӑп, чун-чӗререн юрататӑп—ӑна турӑ та курать; эпӗ вагон чӳречинчен те пӑхаймарӑм, ялан макӑрса пытӑм. (*Куҫҫуль витӗр*). Ҫапах та, кофе ӗҫес пулать. Спасибо сана, Фирс, спасибо, старикӗм. Эсӗ хальччене пурӑнни мана ҫав тери савӑнтарать.

Фирс. Виçĕмкун каçхине.

Гаев. Вăл япăх илтет.

Лопахин. Халĕ акă ман, пиллĕкмĕш сехетре ирхине, Харькова тухса каймалла. Çав тери пăшăрхантарать! Сирĕн çине пăхса савăнас, калаçас килетчĕ... Эсир çав-çавах чипер иккен.

Пищик (*йăвăррăн сывлать*). Пушшех чиперленсе кайнă... Тумланасса Парижри пек тумланнă... Эй, пырса та ан калаç!..

Лопахин. Сирĕн пиччу, Леонид Андреич ав, ман çинчен темĕн те пĕр калать. Ун шучĕпе эпĕ хам, кулак, анчах вăл маншăн пулсан, пурĕпĕр. Калаçтăр-и. Мана нимĕн те кирлĕ мар, ман сире хама ĕлĕкхи пекех ĕнентерес килет, сирĕн тĕлĕнмелле, çав тери йăваш куçăрсене хам çине ĕлĕкхи пекех пăхтарас килет. Эй, ырă кăмăллă турăçăм! Ман атте сирĕн аçупа асламăçу патĕнче крепостной пулса пурăннă, анчах эсир, эсир пĕр вăхăтра мана çав тери нумай усă кӳтĕр, çавăнпа эпĕ йăлтах манса кайнă, эпĕ сире хам тăванран та ытларах юрататăп.

Любовь Андреевна. Чăтса лараймастăп эпĕ, халăм çук... (*Сиксе тăрать те хытă пăлханса утса çӳрет*). Эпĕ ку савăнăçа чăтса ирттерейместĕп... Кулăр манран, айван эпĕ... Савнă шкафăм... (*Шкафа чуптăвать*). Сĕтеллĕм.

Гаев. Эс ҫук чухне кунта няня вилчӗ.

Любовь Андреевна (*ларать те кофе ӗҫет*). Ҫапла, ҫӳлти патшалӑх пултӑр ӑна. Мана ҫырса пӗлтерчӗҫ.

Гаев. Анастасий те вилчӗ. Хӑрах куҫ Петрушка ман патӑмран тухса кайрӗ. Халь хулара, пристав патӗнче пурӑнать. (*Кӗсъинчен канхвет коробки кӑларать, канхвет ӗмет*).

Пищик. Ман хӗрӗм, Дашенька... сире салам калама хушрӗ...

Лопахин. Ман сире мӗн те пулин савӑнтармалли, кӑмӑла киллентермелли сӑмах калас килет. (*Сехет ҫине пӑхса*). Халь каяп ӗнтӗ, калаҫма вӑхӑт ҫук... ну, пӗр-ик-виҫ сӑмахпах каласа парам. Эсир хӑвӑрах пӗлетӗр ӗнтӗ, сирӗн чие садне парӑмсемшӗн сутмалла тунӑ, августӑн 22-мӗшӗнче торги пулмалла, анчах эсир ан пӑшӑрханӑр, савнӑ чунӑм, ҫывӑрӑр кӑмӑлӑра килнӗ пек, ҫӑлӑнма май пур... Акӑ ман проект. Итлеме ыйтатӑп! Сирӗн имени хуларан пурӗ те ҫирӗм ҫухрӑмрв ҫеҫ, ун ҫывӑхӗпе чугун ҫул иртет, чие сачӗпе юханшыв хӗрринче сарӑлса выртакан ҫӗрсене дача валли участоксем ҫине валеҫсен, вӗсене дачӑра пурӑнакансене тара парса тӑрсан, ҫулталӑкра эсир сахалтан та 25 пин тупӑш илсе тӑма пултаратӑр.

Гаев. Каҫарӑр та, епле чепуха ку!

Любовь Андреевна. Эпӗ сире ӑнлансах ҫитерейместӗп, Ермолай Алексеич.

Лопахин. Эсир дачниксенчен, чи сахал илсен те, ҫулталӑкра кашни теҫетиншӑн 25 тенкӗрен кая мар илсе тӑма пултаратӑр, тара парасси ҫинчен халех пӗлтерсе хурсан, эпӗ шансах тӑратӑп, кӗркуннеччен сирӗн пӗр татӑк та юлмасть, йӑлтах илсе пӗтереҫҫӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, эсир ҫӑлӑннӑ тесе саламлатӑп. Вырӑнӗ ытарма ҫук, шывӗ тарӑн. Паллах ӗнтӗ, кӑштах тирпейлес, тасатас пулать... Сӑмахран, мӗнпур пек кивӗ ҫуртсене ишсе антарас, ав, ҫав ниме юрӑхсӑр пӳрте пӑсас, ӗлӗкхи чие садне кастарас...

Любовь Андреевна. Кастарас? Савнӑ чунӑм, каҫарӑр, эсир нимӗн те ӑнланмастӑр. Пӗтӗм кӗпӗрнипе мӗнле те пулин интереслӑ япала пур пулсан вара, вӑл—пирӗн чие сачӗ.

Лопахин. Мӗнпур пахалӑхӗ те унӑн пысӑкӗшӗнче ҫеҫ. Чӑнах, сачӗ пысӑк ӗнтӗ, ҫав тери пысӑк. Чие ҫырлисем икӗ ҫулта пӗрре пулаҫҫӗ, ӑна та пулин ниҫта хума ҫук, никам та илмест.

Гаев. Вӑл сад ҫинчен „Энциклопеди словарӗ" ҫинче те асӑннӑ.

Лопахин (*сехечӗ ҫине пӑхса*). Ытах нимӗн те шухӑшласа кӑлараймасан, тӗлне-йӗрне тупаймасан, августӑн 22-мӗшӗнче чие садне те, мӗнпур пек имение те аукционра сутса

ярасçĕ. Татса каларсам-и ĕнтĕ! Урăх тĕрлĕ çăлăнăç çук, тупа тăватăп сирĕн умăрта. Çук, тенĕ ара, çук.

Фирс. Ĕлĕкхи вăхăтра, пĕр 40—50 çул маларах, чие çырлине типĕтетчĕç, ислететчĕç, мариновать тăватчĕç, варени пĕçеретчĕç те вара...

Гаев. Ан чĕн-ха, Фирс.

Фирс. Типĕтнĕ чие çырлине вара... лавĕ-лавĕпе Мускава, Харькова леçетчĕç. Укçа пурччĕ! Ун чухне типĕтнĕ чие çырли те çемçеччĕ, сĕткенлĕччĕ, тутлăччĕ, пит ырă шăршлăччĕ... Майне пĕлетчĕç ун чухне...

Любовь Андреевна. А халь ăçта кайса кĕчĕ вăл меслет?

Фирс. Маннă. Никам та астумасть.

Пищик (*Любовь Андреевнăна*). Парижра мĕн? Мĕнле? Шапа çисе пăхрăр-и?

Любовь Андреевна. Крокодил çисе пăхрăм.

Пищик. Шухăшлăр-ха эсир...

Лопахин. Ку таринччен ялта господасемпе мужиксем çеç пурăннă, халь ав, дачниксем пурăна пуçларĕç. Пур хуласенче те çавах, чи пĕчĕк хуласене илĕр хăть, таврал-лах дачăсем. Калама пулать, тепрер çирĕм çултан дачник тени, çав тери хунаса кайма пултарать, халь вăл балкон çинче чей ĕçсе кăна ларать-ха, анчах урăхла та пулма пул-

тарать, пĕртен-пĕр теçетинĕ çинче вăл хăй хуçалăхĕпе аппаланма пуçлĕ, вара сирĕн чие сачĕ чи телейлĕ сад, чи пуян, чи паха сад пулса тăрĕ...

Гаев (*тарăхса*). Епле чепуха ку!

Варяпа Яша кĕреççĕ.

Варя. Анне, ак кунта сире валли икĕ телеграмма. (*Çăраççине суйласа илсе, авалхи шкафа янтратса уçать*). Акă вĕсем.

Любовь Андреевна. Парижран. (*Телеграммăсене вуламасăрах чĕрсе тăкать*). Парижпа ĕç таталнă...

Гаев. Пĕлетĕн-и эсĕ, Люба, çак шкафа тунăранпа миçе çул çитнĕ? Пĕр эрне маларах эпĕ аялти сунтăхне туртса уçрăм, пăхатăп, унта темскерпе çунтарса цифрсем çырса хунă. Ку шкафа тунăранпа шăп çĕр çул çитнĕ мĕн. Мĕнле вăл? Э? Юбилей тума пулать. Япали ĕнтĕ, паллах, чунлă япала мар, çапах та, кирек мĕнле пулсан та, кĕнеке шкафĕ.

Пищик (*тĕлĕнсе*). Çĕр çул... Шухăшлăрха эсир!..

Гаев. Çапла... Ку япала... (*Шкафа хыпашлать*). Хаклă та хисеплĕ шкаф! Санăн иртнĕ кунçулна, çĕр çул хушши ытла ĕнтĕ ырлăхпа тĕрĕслĕхĕн сутă идеалĕсем патнелле туртăннă кунçулна саламлатăп; санăн ăнăçлă ĕç патне йыхăракан чĕмсĕр йыхраву

çĕр çул хушши вăйсăрланмарĕ, вăл пирĕн йăх ăрăвĕнче хаваслăх хĕлхемне упраса усрарĕ, пуласлăхăн чи паха кунĕсене кĕтсе илме шанчăк паракан ĕненĕве упрарĕ, вăл пире ырлăхпа обществăри тивĕçлĕх идеалĕсемпе сĕткенлесе ÿстерчĕ. (*Пауза*).

Л о п а х и н. Çапла...

Л ю б о в ь А н д р е е в н а. Эс халь те çавçавах, Леня.

Г а е в (*кăштах нимле мар пулса*). Шартан сылтăмалла кĕтессе! Варрине касап!

Л о п а х и н (*сехет çине пахса*). Ну, ман кайма вăхăт.

Я ш а (*Любовь Андреевнăна эмел парать*). Тен, халь эмел ĕçсе пăхатăр...

П и щ и к. Медикамент тавраша ĕçме кирлĕ мар, савнă чунăм... вĕсенчен ни сиенĕ, ни усси... Парăр-ха кунта... хисеплĕ çыннăм. (*Пилюлисене илет те ывăçтупанĕ çине силлет, унтан вĕсем çине вĕрсе, сăварне хыпать те çиелтен квас сыпать*). Вот!

Л ю б о в ь А н д р е е в н а (*хăраса*). Эсир мĕн, ухмаха ертĕр-и мĕн!

П и щ и к. Пилюлисене йăлтах хыпса ятăм.

Л о п а х и н. Эккей-а çăткăн. (*Пурте кулаççĕ*).

Ф и р с. Вĕсем мăнкун эрнинче пирĕн пата килнĕччĕ, çур витре хăяр çисе ячĕç... (*Мăкăртатать*).

Любовь Андреевна. Мĕн çинчен калаçать вăл?

Варя. Виçĕ çул хушши çапла мăкăртатать ĕнтĕ. Эпир хăнăхнă.

Яша. Ватти çитнĕ.

**Шарлотта Ивановна**—шурă платьепе, çав тери ырхан, платьи çăт çыпăçса тăрать, пиçиххийĕ çинче лорнет, вăл сцена урлă иртсе каять.

Лопахин. Каçарăр, Шарлотта Ивановна, эпĕ сире сывлăх сунма та ĕлкĕреймерĕм. (*Унăн аллине чуптăвасшăн*).

Шарлотта (*аллине туртса илсе*). Алла чуптума ирĕк парсан сире, иртĕхсе кайăр тата, унтан чавсана, хулпуççие чуптăвас тейĕр...

Лопахин. Ăнмасть паян ман. (*Пурте кулаççĕ*). Шарлотта Ивановна, фокус кăтартăр-ха!

Любовь Андреевна. Кăтартса парăр фокус!

Шарлотта. Кирлĕ мар. Çывăрас килет. (*Тухса каять*).

Лопахин. Тепĕр виç эрнерен курнăçăпăр. (*Любовь Андреевна аллине чуптăвать*). Халлĕхе сывă пулăр-ха. Вăхăт ĕнтĕ. (*Гаева*). Тепре куриччен. (*Пищика чуптăвать*). Сывă пулăр. (*Малтан Варяна, унтан Фирспа Яшăна алă парать*). Тухса каяс килмест.

(*Любовь Андреевнăна*). Дачăсем пирки мĕн те пулин шухăшласан, пĕлтерĕр вара, эпĕ кивçенле пĕр аллă пин тупса парăп. Чăнласах шухăшласа пăхăр.

Варя (*çилĕпе*). Кайăрсам-и ĕнтĕ!

Лопахин. Каяп ара, каяп... (*Тухса каять*).

Гаев. Хам. Чим-ха, пардон... Варя ăна качча тухать, Варян пулас упăшки вăл.

Варя. Ытлашши ан калаçăр-ха эсир, пичче.

Любовь Андреевна. Мĕнех вара, Варя, эпĕ хавас. Çынни лайăх вăл.

Пищик. Çынни ĕнтĕ, тĕрĕссипех калас пулать... тивĕçлĕрен те тивĕçлĕ... Ман Дашенька та... çапла калать, тĕрлĕрен сăмах калать, тет. (*Харлаттарса илет, анчах çав хушăрах вăранать*). Çапах та, хисеплĕ çыннăм, эсир мана кивçен... пĕр 240 тенкĕ тупса парăр... ыран ман закладшăн процент тӳлемелле...

Варя (*хăраса*). Çук, çук!

Любовь Андреевна. Ман чăнахах та нимĕн те çук.

Пищик. Тупăнать. (*Кулать*). Нихăçан та шанчăка çухатмастăп. Ак ĕнтĕ, пĕтĕмĕшпех пĕтрĕ, пĕтрĕм, тетĕп хам шухăшпа, анчах пăх та кур,—ман çĕр урлă чугун çул каçса каять... мана тӳлеççĕ. Малалла ак, паян мартăк, ыран, каллех мĕн те пулин сиксе ту-

хать... Дашенька икçĕр пин выляса илет... ун билет пур.

Любовь Андреевна. Канма выртас умĕн кофе ĕçме юрать.

Фирс (*Гаева щеткăпа тасатать, çав хушăрах ăс парса*). Каллех урăх брюкине тăхăннă. Мĕн тăвас ĕнтĕ ман сирĕнпе!

Варя (*хуллен*). Аня сывăрать. (*Шăппăн чӳречене уçать*). Хĕвел тухрĕ ĕнтĕ, сивĕ мар. Пăхăр-ха, анне: епле илемлĕ йывăççем! Турăçăм, сывлăшĕ епле! Шăнкăрчсем юрлаççĕ!

Гаев (*тепĕр чӳречине уçать*). Сад шап-шурах. Эс манман-и, Люба? Ак çак вăрăм аллея, чăсса хунă чĕн пиçиххи пек, тӳп-тӳрĕ выртакан аллея, уйăхлă каçсенче çиçсе тăрать. Астăватăн-и эсĕ? Манман-и?

Любовь Андреевна (*чӳречерен садалла пăхать*). О, ман ача чухнехи кунăмсем, тап-таса кунăмсем! Çак ачасен пӳлĕмĕнче эп сывăраттăм, ак çакăнтан садалла пăхаттăм, манпа пĕрле кашни ир телей вăранатчĕ, ун чухне те вăл çакăн пекехчĕ, нимĕн те улшăнман. (*Савăннипе кулать*). Йалт, йăлтах шурă! О, садăмçăм! Тĕксĕм йĕпе-сапа кĕркуннепе сивĕ хĕл иртнĕ хыççăн, эсĕ каллех çамрăк, каллех телейлĕ, çӳлти ангелсем пăрахман-ха сана... Хам кăкăрăмпа хулпуççи çинчи йывăр чула илсе пăрахма май пулсанччĕ, ĕлĕкхи пурнăçăма манма пултарсанччĕ эпĕ!

Гаев. Çапла çав, çав тери тĕлĕнмелле пулсан та, садне те парăмшăн сутаççĕ ĕнтĕ...

Любовь Андреевна. Пăхăр-ха, садра вилнĕ анне çӳрет... Шурă кĕпепе! (*Савăнни-пе кулать*). Вăлах ку.

Гаев. Ăçта?

Варя. Турра асăнăр, анне! Мĕн эсир?

Любовь Андреевна. Никам та çук, мана ахаль курăннă пек туйăнчĕ. Сылтăмра, беседка патнелле пăрăнса кайнă çĕрте, шур йăвăç пĕкĕрĕлсе тăрать, хĕрарăм пекех курăнса кайрĕ...

**Трофимов** кĕрет, вăл студент мундирĕ тăхăннă. Мундирĕ кивĕ,– куçлăхпа.

Любовь Андреевна. Епле илемлĕ сад! Вĕçĕ-хĕррисĕр шап-шурă чечексем, шенкер тӳпе...

Трофимов. Любовь Андреевна! (*Вăл ун çинелле çаврăнса пăхать*). Эпĕ сире пуç таяп та халех тухса каяп. (*Аллине хĕрӳллĕн чуптăвать*). Мана ирччен тăхтама хушнăччĕ, анчах эпĕ чăтса тăраймарăм...

Любовь Андреевна мĕн пулнине тавçăрса илеймесĕр пăхать.

Варя (*куççуль витĕр*). Петя Трофимов...

Трофимов. Петя Трофимов, сирĕн Гришăна вĕрентсе пурăннă учитель... Неушлĕ çав териех улшăннă эпĕ?

Любовь Андреевна ăна ыталаса илет те шăппăн йĕрет.

Гаев (*кăмăлсăрланса*). Çитĕ ĕнтĕ, Люба, çитĕ.

Варя (*йĕрет*). Каларăм вĕт, Петя, ирччен тăхтăр, терĕм.

Любовь Андреевна. Гриша... савнă ывăлăм... Гриша... Ывăлăм.

Варя. Мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ, аннеçĕм. Турă ирĕкĕ.

Трофимов (*çемçен, куççулĕ витĕр*). Çитĕ ĕнтĕ, çитĕ...

Любовь Андреевна (*шăппăн йĕрет*). Пĕтрĕ вĕт ача, шыва путса вилчĕ. Мĕн тума? Мĕншĕн, тусăм? (*Шăппăнрах*). Унта Аня сывăрать, а эпĕ... хытă калаçап... шавлап... Мĕн-ха, Петя. Ма çав териех сăнсăрланса кайнă эсир? Мĕншĕн ватăлнă?

Трофимов. Мана вагон çинче пĕр хĕрарăм—йăптăхланнă улпут, терĕ.

Любовь Андреевна. Эсир ун чухне ачаччĕ, пит чипер студентчĕ, халь ав, çӳçӳсем сайралнă, куçлăхпа. Неушлĕ эсир халиччен студент? (*Алăк патнелле утать*).

Трофимов. Эпĕ ĕмĕрех студент пулап пулмалла.

Любовь Андреевна (*малтан шăллĕне, унтан Варяна чуптăвать*). Ну, кайса сывăрах ĕнтĕ... Эсĕ те ватăлнă, Леонид.

Пищик. Халь çывăрмалла эппин... Ох, подагра-çке-ха çав ман. Эпĕ сирĕн патах

юлап... Мана, Любовь Андреевна, чунăмçăм, ыран ир... 240 тенкĕ... парсан...

Г а е в. Вăл пур—хăйĕннипех аптратать.

П и щ и к. 240 тенкĕ... закладшăн процент тӳлемелле.

Любовь Андреевна. Çук ман укçа, чунăм.

П и щ и к. Тавăрса парап ара, чунăм... Нумай укçа мар вĕт...

Л ю б о в ь А н д р е е в н а. Ну, юрĕ, Леонид парать... Пар эсĕ ăна, Леонид.

Г а е в. Парап эпĕ ăна, кĕсйӳне тавăрса хур.

Л ю б о в ь А н д р е е в н а. Мĕн тăвас ĕнтĕ, пар... Кирлĕ вĕт ăна... Тавăрса парать.

**Любовь Андреевна, Трофимов, Пищик, Фирс** тухса каяççĕ. Сцена çине **Гаев, Варя** тата **Яша** юлаççĕ.

Г а е в. Аппа, эс укçа тăккалас йăлана çаплах пăрахайман-ха. (*Яшăна*). Пăрăн-ха, ачам, санран чăх шăрши кĕрет.

Я ш а (*кулса*). Леонид Андреич, эсир ĕлĕк мĕнле пулнă, халĕ те çав-çавах.

Г а е в. Кама? (*Варяна*). Мĕн терĕ вăл?

В а р я (*Яшăна*). Ялтан аннӳ килнĕ, ĕнертенпех тарçăсен пӳлĕмĕнче ларать, сана курасшăн...

Я ш а. Пулин ара, çăва патне унпа!

В а р я. Ах, намăссăр.

Я ш а. Пит кирлĕ вăл мана. Ыран та килме пултаратчĕ. (*Тухса каять*).

Варя. Анне çав-çавах, мĕнле пулнă, халь те çавăн пекех, нимĕн те улшăнман. Ирĕк парсан ăна, йăлтах парса пĕтерет.

Гаев. Çапла çав... (*Пауза*). Пĕр-пĕр чиртен сывалма çав тери нумай эмел сĕнеççĕ пулсан вара, вăл чиртен сыватма май çуккине пĕлтерет. Эпĕ шухăшлатăп, шухăшпа пуç мимисене ыраттаратăп, ман мелĕсем нумай, темĕн чухлех, вăл ĕнтĕ, тĕрĕссипе, пĕр усăллă мел те çук, тени пулать. Камран та пулин наследство илме май тупсан, пит аван пулнă пулĕччĕ: хамăр Аняна пит пуян çĕре качча парсан аванччĕ, Ярославле кайса кинеми-графиня патĕнче телей шыраса пăхнă пулсан та пит аван пулнă пулĕччĕ те. Кинеми вĕт çав тери пуян.

Варя (*макăрать*). Турă пулăшсан тем пекехчĕ.

Гаев. Ан ўле. Кинеми çав тери пуян, анчах вăл пире юратмасть. Мĕншĕн тесен аппа, дворянина мар, присяжный поверенныя качча тухнă...

Алăкра Аня курăнать.

Гаев. Дворянин мар çынна качча тухрĕ çав,—хăйне хăй çав тери ырă кăмăллă çын пек тыткаларĕ теме те çук. Вăл аван, кăмăллă, йăваш, эп ăна çав тери юрататăп, анчах кирек мĕн шухăшласа кăларсан та, тем тĕрлĕ

çемçетсе каласан та, тӳррипех калас пулать, унăн çитменлĕхĕсем пурах. Вăл унăн кашни хускалăвĕнчех сисĕнет.

Варя (*шăппăн*). Алăкра Аня тăрать.

Гаев. Кама? (*Пауза*). Тĕлĕнмелле, ман сылтăм куçа темскер кĕрсе кайрĕ... Япăх куракан пулчĕ. Кĕçнерникун, округри суда кайсан...

Аня кĕрет.

Варя. Ма çывăрмастăн эс, Аня?

Аня. Ыйăх килмест. Çывăраймастăп.

Гаев. Чĕппĕм. (*Аня питне, аллисене чуптăвать*). Савнă пепкем... (*Куççуль витĕр*). Эс маншăн аппа хĕрĕ мар, эсĕ ман ангел, эсĕ маншăн пурте. Ĕнен мана, ĕнен...

Аня. Эп ĕненетĕп сана, кукка. Сана пурте юратаççĕ, хисеплеççĕ... анчах, юратнă кукка, сан чĕнме кирлĕ мар, сан шăп пулас пулать, нимĕн те ан шарла. Халь çеç акă, эсĕ ман анне çинчен, хăв аппу çинчен мĕн каларăн? Мĕн тума кирлĕ пулчĕ вăл сана, ма каларăн?

Гаев. Çапла çав, çапла... (*Аня аллине тытса, хăйĕн питне хуплать*). Чăнах вĕтха, вăл çав тери хăрушла! Турăçăм! Турăçăм, çăл мана! Паян тата шкаф умĕнче сăмах каларăм... ытла та ухмахла-çке! Каласа пĕтерсен тин ăнлантăм хам ухмахланнине.

Варя. Чăн, пиччеçĕм, сирĕн шарламалла марччĕ. Ан чĕнĕр, урăх нимĕн те мар.

Аня. Чӗнмесен хăвнах çăмăл пулать.

Гаев. Шарламăп. (*Аняпа Варя аллисене чуптăвать*). Чӗнместӗп. Ĕç çинчен çеç эпӗ. Кĕçнерникун округри судра пултăм, ну, пухăннă ĕнтĕ компани, пуçланчĕ калаçу, ун çинчен те кун çинчен калаçма пуçларĕç, банка процент тӳлеме вексель тăрăх кивçен тупма пулать пулмалла-ха.

Варя. Турă пулăшсан тем пекехчĕ!

Гаев. Ытларикун тата тепре кайса калаçам-ха. (*Варяна*). Ан ӳле. (*Аняна*). Аннӳ Лопахинпа калаçса пăхтăр; вăл, паллах ĕнтĕ, аннӳне кăмăлсăр тăвас çук... А эсĕ, кăшт кансан, Ярославле графиня патне, мăнаппу патне кайăн. Вăт çапла, виç кĕтесрен пуçарса ярăпăр та,—пирĕн ĕç тухатех. Процентсене тӳлетпĕрех, эп шансах тăратăп... (*Çăварне канхвет хыпать*). Мĕнпе кирлĕ унпа, хам чысăмпа тупа тăватăп, имение суттармастпăрах! (*Хавасланарах*). Телейĕмпе тупа тăватăп! Ак сана ман аллăм, имение аукционра сутасси патне илсе çитеретĕп пулсан, мана ниме юрăхсăр, ултавçă çын теме пултаратăн! Пĕтĕм пурнăçăмпа тупа тăватăп!

Аня (*ун патне каллех лăпкă кăмăлĕ таврăннă, вăл телейлĕ*). Епле аван эсĕ, кукка, епле ăслă! (*Куккăшне ыталать*). Халь ĕнтĕ лăплантăм! Лăплантăм! Эпĕ телейлĕ!

Фирс кĕрет.

Фирс (*ӳкĕтлесе*). Леонид Андреич, турăран хăрамастăр эсир! Хăçан çывăратăр?

Гаев. Халех, халех. Каях эс, Фирс, эп ĕнтĕ, юрĕ, хамах саланса вырттăп. Ну, ачасем, бай-бай... Ыттине ыран калăп, халь ĕнтĕ кайса çывăрăрах. (*Аняпа Варяна чуптăвать*). Эпĕ сакăрвуннăмĕш çулсенчи этем... Мухтасах каймаççĕ вăл вăхăта, çапах та, калама пултарап, хам ĕненнĕ пек шухăшланăшăн сахалах лекмен мана пурнăçра. Ахальрен мар мана мужик юрататъ. Мужике пĕлес пулать! Пĕлес пулать, ун патне хăш енчен...

Аня. Каллех эс, кукка!

Варя. Ан шарлăр эсир, пичче.

Фирс (*çилĕпе*). Леонид Андреич!

Гаев. Кайрăм ĕнтĕ, кайрăм... Выртăрах. Икĕ бортран—баррине! Тап-тасине кӳртсе хурап... (*Каять, ун хыççăн Фирс кăштăртатса утать*).

Аня. Халь ĕнтĕ лăплантăм. Ярославле каяс килмест. Юратмастăп эп мăнаппана, анчах эп, пурĕпĕр, лăпкă. Спасибо куккана. (*Ларать*).

Варя. Çывăрас пулать. Каям-ха. А кунта сансăр пуçне аван мар япала пулса иртрĕ. Тарçăсем пурнакан кивĕ пӳртре, хăвах пĕлен ĕнтĕ, ватă тарçăсем кăна пурăнаççĕ: Ефимюшка, Поля, Евстигней, ну, Карп тата унта. Хăйсем патне темскерле иртен-çӳренсене кӳртсе

вырттара пуçланă—эп шарламасăр тăтăм. Анчах илтетĕп, хайхисем ман çинчен сăмах сарнă, эп вĕсене пĕр пăрçапа çеç тăрантарма хушнă пулать. Хытă пирки имĕш... Евстигней хăтланнă мар-и ара... Пит аван, тетĕп хам ăшра... Эс, апла пулсан, тăхта, эп сана, тетĕп. Чĕнтертĕм Евстигнея... (*Анаслать*). Пычĕ... Менле-ха эс, Евстигней, ухмах... аплакапла, тетĕп... (*Аня çине пăхса*). Аничка!.. (*Пауза*). Çывăрса кайрĕ!.. (*Аняна хулĕнчен тытса çавăтать*). Айта, вырăн çине кайса вырттарам... Айта!.. (*Çавăтса утать*). Чунăм çывăрса кайрĕ! Айта... (*Каяççĕ*).

> Сад хыçĕнче инçетре кĕтӳçĕ шăхличĕпе юрă кĕвĕлени илтĕнет.
> **Трофимов** сцена урлă каçать, анчах **Варяпа Аняна** курса, чарăнса тăрать.

Варя. Тссс... Çывăрать вăл... çывăрать... Кайăпăр, тăванăм.

Аня (*ыйхă витĕр, шăппăн*). Çав тери ывăнтăм... пур шăнкравсем те... Кукка... юратнă кукка... анне те, кукка та...

Варя. Каяр, ачам, каяр... (*Аня пӳлĕмне кĕрсе каяççĕ*).

Трофимов (*ытараймасăр*). Хĕвелĕм! Çурхи кунăм!

Чаршав

# ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Хир. Тахçанах пăрахăça тухнă пĕчĕк часовня. Вăл кивелсе, тайăлса кайнă. Ун çумĕнче çăл, пысăк чулсем, ку чулсем тахçан вилтăпри çинче хунă плитасем пулнă пулмалла, унтах кивĕ сак. Гаев усадьбине илсе каякан çул курăнса выртать. Аякра çӳлелле кармашăннă топольсем тĕксĕмĕн курăнса ларассĕ: çак вырăнтан чие сачĕ пуçланса каять. Инçетре ретĕн лартса тухнă телеграф юписем курăнассĕ, инçетре-инçетре, горизонтра, пысăк хула мĕлки курăнать, вăл уяр çанталăкра çеç уççăн курăнать. Кĕçех хĕвел анса лармалла. **Шарлотта, Яша, Дуняша** сак çинче ларассĕ; **Епиходов** ура çинче тăрса, гитара калать; пурте шухăша кайса ларассĕ. **Шарлотта** кивĕ картуспа, вăл хулпуççийĕ çинчен пăшалне вĕçерсе илет те пăшал çаккине тӳрлетет.

Шарлотта (*шухăша кайса*). Чăн-чăн паспорт çук та ман, хам миçе çултине те пĕлместĕп, хама хам яланах çамрăк пек туйăнать. Эп пĕчĕк чухне, аттепе анне ярмаркăсем тăрăх çӳретчĕç, пит аван вăййăсем выляса кăтартатчĕç. Эпĕ salto-mortale тата тĕрлĕрен вăййăсем тукалаттăм. Аттепе анне вилсен вара, мана пĕр нимĕç госпожа хăй патне илчĕ те

вĕрентме пуçларĕ. Юрать. Ӳссе çитрĕм, унтан вара гувернантка кĕтĕм. Анчах ăçтисем эп, кам эпĕ, — ăна хам та пĕлместĕп... Ман атте-аннем камсем, тен, вĕсем венчет те туман... пĕлместĕп. (*Кĕсьинчен хăяр кăларать те çиме пуçлать*). Нимĕн те пĕлместĕп. (*Пауза*). Çав тери калаçас килет, анчах никампа калаçма çук.. Никам та çук ман.

Епиходов (*гитара каласа юрлать*). „Мĕн мана шавлă тĕнче, мĕн мана туссемпе тăшмансем"... Эх, мĕнле савнăçлă та мандолинăпа вылямa!

Дуняша. Мандолина мар вăл, гитара. (*Тĕкĕр çине пăхса, питне пудра сĕрет*).

Епиходов. Юратса пăрахнă ăссăршăн пулсан, ку мандолина... (*Юрлать*). „Савни юратăвĕн хĕлхемĕ хĕмлентертĕр çеç чĕреме".

Яша ун хыççăн юрласа пырать.

Шарлотта. Хăрушла юрлаççĕ ку çынсем... Фуй! Шакалсем пек.

Дуняша (*Яшăна*). Çапах та мĕн тери телей вăл ытти патшалăхра пулса курасси.

Яша. Çапла çав. Сирĕнпе килĕшмесĕр тăма пултараймастăп. (*Анаслать, унтан сигарне тивертсе ярать*).

Епиходов. Паллах ĕнтĕ. Ытти патшалăхра унта мĕнле кирлĕ—çапла.

Яша. Паллах ара.

Епиходов. Эп—пĕлекен ăспуçлă çын, тĕрлĕрен чаплă кĕнекесем вулатăп, анчах хам кăмăл хăш еннелле туртăннине ниепле те ăнланса илейместĕп, мĕн тăвас килет-ши ман, пурăнас килет-ши, е перĕнсе вилес килет-ши, ну, çапах та, кирек мĕнле пулсан та, эпĕ револьвера хампа пĕрлех илсе çӳретĕп. Акă вал... (*Револьверне кăтартать*).

Шарлотта. Пĕтертĕм. Халь каяп ĕнтĕ. (*Пăшалне çакать*). Эсĕ, Епиходов, пит ăслă тата пит хăрушă çын; сана хĕрарăмсем юратса ăсран каймалла. Бррр! (*Утать*). Ку ăслăн каласакансем—пурте ухмахсем, никампа калаçма çук... Ялан пĕччен, тăр пĕччен, никам та çук ман... кам эпĕ, паллă мар... (*Васкамасăр тухса каять*).

Епиходов. Тĕрĕссипе каласан, ытти япаласене асăнмасăр-тумасăрах, ытахальрен тенĕ пек, ман хам çинчен калама лекет, пурнăç тени мана пĕртте шеллемест, ман тĕллĕн вăл пĕчĕк карапа ыткăнтаран тăвăлпа пĕрех. Сăмахран, эп йăнăшатăп пулсан, маха эп паян ир вăранатăп та, тĕслĕхшĕн çеç илсе калам-ха, пăхап, а ман кăкăр çинче çав тери хăрушла пысăк эрешмен... Ак çакăн пек. (*Аллисемпе кăтартать*). Квас ĕçме тăрсан та çавах, ăсса илен те, а унта, мĕн те пулин, çав тери аван мар япала, таракан майлăскер. (*Пауза*). Бокля вуланă-и эсир? (*Пауза*). Ман

сире кансёрлес кӑмӑл пур, Авдотья Федоровна, пӗр-ик сӑмахлӑха ҫеҫ.

Д у н я ш а. Калӑр.

Е п и х о д о в. Ман сирӗнпе пӗччен ҫӗрте калаҫас килет... (*Ассӑн хашлатса сывлать*).

Д у н я ш а (*именсе*). Юрӗ... анчах малтан ман тальмӑчкӑна илсе килсе парӑр... Вӑл шкаф патӗнче... кунта кӑшт сулхӑнрах...

Е п и х о д о в. Юрӗ... илсе килӗп... Халь пӗлетӗп ӗнтӗ револьверпе мӗн тумаллине... (*Гитарӑпа выляса тухса каять*).

Я ш а. Ҫирӗм икӗ инкек! Ухмах этем вӑл, хамӑр хушӑра каласан. (*Анаслать*).

Д у н я ш а. Тур ҫырлахтӑрах, перӗнсе вилӗ тата. (*Пауза*). Пит шикленекен пулса кайрӑм, ялан ӑш вӑркать. Мана ача чухнех улпут патне илсе килнӗ, халь ӗнтӗ ялти пурнӑҫран сивӗнтӗм, алӑсем те ав, шап-шурӑ, улпут хӗрӗнни пек. Ачашланса кайрӑм, ҫав тери тип-терлӗ, ҫепӗҫ пулса кайрӑм, пуринчен те хӑрап... Хӑрушӑ. Ытах эсир, Яша, улталасан мана, пӗлместӗп, ман нервӑсемпе мӗн пуласси не.

Я ш а (*ӑна чуптӑвать*). Пӗчӗкҫеҫ хӑярӑм! Паллах ара, кашни хӗр хӑйне хӑй астума тивӗҫ, нимрен ытла эп харпӑр хӑйне йӗркесӗр тыткалакан хӗре юратмастӑп.

Д у н я ш а. Эпӗ сире ҫав тери юратса пӑрахрӑм, эсир вӗреннӗ ҫын, кирек мӗн ҫинчен те калаҫма пултаратӑр. (*Пауза*).

Яша (*анасласа*). Çапла çав... Ман шухăшпа çапла: хĕр тени кама та пулин юрататъ пулсан, вăл вара йĕркесĕр хĕр. (*Пауза*). Уçă сывлăшра сигар туртма аван... (*Итлет*). Кунта килеççĕ... Улпутсем...

Дуняша ăна хăвăрт ыталаса илет.

Яша. Кайăрах киле, ак çак çулпа кайăр, шыва кĕме кайнă пек пултăр, унсăрăн тĕлпулĕç те тата, ман çинчен тем шухăшлĕç, сирĕнпе курнăçма килнĕ, тейĕç, чăтма пултараймастăп ун пек япалана.

Дуняша (*хуллен ÿсĕрет*). Ман сигар тĕтĕмĕпе пуç ыратма пуçларĕ... (*Тухса каять*).

Яша часовня патне ларса юлать. **Любовь Андреевна, Гаев** тата **Лопахин** кĕреççĕ.

Лопахин. Ĕçе татас пулать,—вăхăт кĕтмест. Ыйтăвĕ те вĕт ним тĕшне тăмасть. Çĕре дачăсем тума парас тетĕр-и, çук-и? Пĕр сăмахпа калăр: çапла-и, çапла мар-и? Пĕр сăмахпа çеç!

Любовь Андреевна. Кам кунта çав тери путсĕр сигар туртать... (*Ларать*).

Гаев. Чугун çул турĕç те ак, пит те канлĕ. (*Ларать*). Хулана каян та ирхи апат çиен... саррине—варрине! Ман малтан киле кайса пĕрер парти вылясчĕ те...

Любовь Андреевна. Ĕлкĕрĕн-ха.

Лопахин. Пĕр сăмах çеç. (*Ӳкĕтлесе*). Калăрсам-и ĕнтĕ!

Гаев (*анасласа*). Кама?

Любовь Андреевна (*хăй пăртманикне пахать*). Ĕнер укçа нумайччĕ, паян ав, сахалланса юлнă. Мĕскĕн Варя, перекетлес тесе, пурне те сĕт яшки çитерет, кухняра стариксене пăрçа çеç çитереççĕ, эпĕ пур, тĕлне-йĕрне пĕлмесĕр тăккалап... (*Пăртманикне ӳкерсе ылттăн тенкĕсене сапалантарать*). Ну, тухса ӳкрĕç... (*Чунĕ тăвăрланать*).

Яша. Ирĕк парăрсам-и, халех пуçтаратăп. (*Тенкĕсене пуçтарать*).

Любовь Андреевна. Ыр сын пул, Яша. Мĕншĕн кайрăм-ха эп ирхи апат çиме... Ним тĕшне те тăмасть сирĕн музыклă ресторанăр, сĕтел çиттисенчен супăнь шăрши кĕрсе тăрать... Ма çав териех нумай ĕçмелле-ха, Леня? Ма-ха çавăн пекех нумай çимелле? Мĕншĕн çав тери нумай калаçмалла? Паян ресторанра эс каллех нумай калаçрăн, çитменне тата, ялан, вырăнсăр. Çитмĕлмĕш çулсем çинчен, декадентсем çинчен. Кама калан? Половойсене калатăн-и декадентсем çинчен!

Лопахин. Çапла çав.

Гаев (*аллипе сулать*). Эпĕ, паллах, тӳрленейместĕп пулмалла ĕнтĕ... (*Вĕчĕрхенсе Яшăна*). Мĕн эс ялан куç умĕнче кускаласа çӳрен...

Я ш а (*кулать*). Сирĕн сассăра илтсен, кулмасăр чăтаймастăп эпĕ.

Г а е в (*аппăшне*). Е—эпĕ, е—вăл...

Л ю б о в ь  А н д р е е в н а. Кайăрах, Яша, уттарăр...

Я ш а (*кошелекне Любовь Андреевнăна парать*). Халех каяп. (*Куллине аран-аран пусарать*). Халех... (*Каять*).

Л о п а х и н. Сирĕн имение пуян Дериганов илме хатĕрленет. Торги тунă çĕре хăй килесшĕн, теççĕ.

Л ю б о в ь  А н д р е е в н а. А эсир ăçтан илтрĕр?

Л о п а х и н. Хулара калаçаççĕ.

Г а е в. Ярославльри кинеми укçа ярса пама пулчĕ, хăçан, мĕн чухлĕ ярса парать—паллă мар....

Л о п а х и н. Мĕн чухлĕ ярса парать вăл? Çĕр пин-и? Икçĕр-и?

Л ю б о в ь  А н д р е е в н а. Ну... вун-вунпилĕк пин, уншăн та спасибо.

Л о п а х и н. Каçарăр, сирĕн пек çăмăл шухăшлă çынсене, сирĕн пек, ĕç тума пĕлмен тĕлĕнмелле çынсене, господа, эпĕ халиччен тĕл пулман. Вырăс чĕлхипе калаççĕ сире: сирĕн имение сутаççĕ, а эсир ăнланман пек хăтланатăр.

Л ю б о в ь  А н д р е е в н а. Мĕн тумалла-ха ĕнтĕ пирĕн? Вĕрентĕр, мĕн?

Лопахин. Эп сире кашни кун вĕрентеп. Кашни кун çавăн çинчен калап. Чие садне те, çĕрне те дачăсем тума тара парас пулать, ку ĕçе халех, хăвăртрах тумалла,—аукцион сăмса умĕнче! Ăнланăр! Ĕçе пĕрре татса хурсан вара, дачăсем пулчăр тесен, укçа мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ параççĕ, эсир вара çăлăнатăр.

Любовь Андреевна. Дачăсем, дачниксем—мĕн тери йĕрĕнчĕк вĕсем, каçарăр.

Гаев. Пĕтĕмĕшпех килĕшетĕп санпа.

Лопахин. Эпĕ е ĕсĕклесе йĕрсе ярап, е кăшкăрса ярап, е ăнран кайса ӳкеп. Пултараймастăп! Ăнран ятăр эсир мана! (*Гаева*). Хĕрарăм эсир!

Гаев. Кама?

Лопахин. Хĕрарăм! (*Кайма тăрать*).

Любовь Андреевна (*хăраса*). Çук, ан кайăр, ларăрсам-и ĕнтĕ, чунăм. Юлма ыйтатăп. Тен, мĕн те пулин шухăшласа кăларăпăр!

Лопахин. Мĕн шухăшламалли пур унта!

Любовь Андреевна. Ан кайăрсам ĕнтĕ, тархасшăн. Сирĕнпе, çапах та, савăкрах... (*Пауза*). Эп çаплах темскере кĕтеп, хамăр çине çурт ишĕлсе анасса кĕтнĕ пекех.

Гаев (*тарăн шухăша кайса*). Дуплета—кĕтессе... Краузе—варрине...

Любовь Андреевна. Пит нумай çылăха кĕтĕмĕр çав...

Лопахин. Мĕн çылăхĕ пултăр сирĕн...

Гаев (*сăварне канхвет хыпать*). Ман çинчен, пĕтĕм пурлăхне канхвет çисе пĕтерчĕ, теççĕ... (*Кулать*).

Любовь Андреевна. О, çылăхăмсем... Эп укçана яланах, ухмаха ернĕ çын пек, чарусăр тăккаланӑ, парăмран хăтăла пĕлмен çынна качча тухнă. Упăшкам ман шампански ĕçе вилчĕ,—çав тери хыт ĕçетчĕ вăл—инкек çине тата урăххине юратса пăрахрăм, пĕрлешрĕм, шăп çак вăхăтра,—вăл пирвайхи инкек пулчĕ-ха, ман пуç çинчех ишĕлсе анчĕ; ак çакăнта, ак çак шыва... ман ывăл ачам путса вилчĕ... вара эп ют патшалăха тухса кайрăм, яланлăхах кайрăм, нихăçан та таврăнас мар, çак юханшыва куçăм ан куртăр, терĕм... Куçăмсене хупрăм, хама хам ăнланмасăр тартăм, анчах вăл ман хыççăн... хĕрхенӳсĕр, тискер. Ментона сывăхĕнче дача туянтăм, мĕншĕн тесен, вăл унта чирлесе ӳкрĕ. Вара эп виçĕ çул хушши кунĕн-çĕрĕн канăç курмасăр асапланса пурăнтăм, вăл, чирлĕскер, мана ăнран ячĕ, чунăм типсе ларчĕ. Пĕлтĕр вара, парăмсене пула дачăна сутса ярсан, Парижа куçрăм, вăл унта мана çаратрĕ, пăрахрĕ, урăххипе çыхланса кайрĕ, эпĕ наркăмăш ĕçсе вилме тăтăм... Ытла та ухмахла çав, намăс... Сасартăк Российăна, тăван çĕршыва, хĕрĕм патне чун турта пуçларĕ...

(*Куççульне шăлать*). Турăçăм, турăçăм, хĕрхен мана, каçар ман çылăхăмсене! Ан асаплантар мана текех! (*Кĕсьинчен телеграмма кăларать*). Паян Парижран илтĕм... Каçару ыйтать, таврăнма ўкĕтлет... (*Телеграммăна чĕркелесе тăкать*). Музыка илтĕнет пулас. (*Тимлесе итлет*).

Гаев. Вăл еврейсен чаплă оркестрĕ. Астăватăн-и, тăвата сĕрмекупăс, флейта тата контрабас.

Любовь Андреевна. Вăл çаплах вылять-и-ха? Мĕнле те пулин хамăр пата чĕнтерсе, вечер пекки туса ирттересчĕ.

Лопахин (*тимлесе итлет*). Илтĕнмест... (*Шăппăн юрлать*). „Укçа пулсан, нимĕç вырăса та француз тăвĕ". (*Кулать*). Ĕнер эпĕ театрта пĕр пьеса куртăм, çав тери кулăшла.

Любовь Андреевна. Кулăшли нимех те çук пуль те-ха. Сирĕн пьеса мар, хăвăр çине час-часрах çаврăнса пăхмалла. Ытла та тĕксĕм пурнăçпа пурăнатăр эсир, кирлĕ мара пит нумай калаçатăр.

Лопахин. Вăл тĕрĕс ĕнтĕ. Тўрех калас пулать, пурнăçĕ пирĕн çав тери ухмахла... (*Пауза*). Атте ман мужик, тăмсай пулнă, нимĕн те ăнланман, мана вĕрентмен, ўсĕрпе хĕненĕ, çитменне тата ялан патакпа. Тĕрĕссипе, эп хам та атте пекех тăмсай, ниме

те вӗренмен, сыракса ҫав тери начар ҫырап, ҫынсенчен намӑс, сысна пек ҫырап.

Любовь Андреевна. Авланас пулать сирӗн, тусӑм.

Лопахин. Ҫапла... Вӑл тӗрӗс ӗнтӗ.

Любовь Андреевна. Пирӗн Варяна илсен аван пулмалла. Хӗрӗ вӑл аванскер.

Лопахин. Да.

Любовь Андреевна. Вӑл ман — ӗҫе-мӗне тиркесе тӑмасть, кунӗпе ӗҫлет, пуринчен ытла, вӑл сире юрататать. Вӑл та сире тахҫанах кӑмӑла каять.

Лопахин. Мӗнех вара? Эп хирӗҫ мар. Хӗрӗ аван вӑл. (*Пауза*).

Гаев. Банкра мана вырӑн парасшӑн. Ҫулталӑкра ултӑ пин... Илтнӗ-и?

Любовь Андреевна. Ӑҫта ӗнтӗ сана!.. Ларах...

Фирс кӗрет, вӑл пальто илсе килнӗ.

Фирс (*Гаева*). Тӑхӑнса ярӑр, сударь, унсӑрӑн сулхӑн кунта.

Гаев (*пальто тӑхӑнать*). Йӑлӑхтартӑн эс мана.

Фирс. Неччу унта... Ирхине каламасӑрах тухса кайнӑ. (*Ӑна пӑхса ҫаврӑнать*).

Любовь Андреевна. Пит ватӑлса кайнӑ-ҫке эсӗ, Фирс!

Фирс. Мӗн хушас кӑмӑлӑр пур?

Лопахин. Пит ватӑлса кайнӑ теҫҫӗ сана!

Фирс. Такҫантанпах пурӑнатӑп. Мана авлантарма хатӗрленнӗ чух, сирӗн аҫу ҫут тӗнчере те ҫук-ха ун чух... (*Кулать*). Ирӗк парсан вара, аслӑ камердинер пулса тӑтӑм. Ирӗке тухма килӗшмерӗм эп ун чухне, улпутсем патӗнчех юлтӑм... (*Пауза*). Астӑватӑп, пурте хӗпӗртенӗ, мӗншӗн хӗпӗртенӗ, хӑйсем те пӗлмеҫҫӗ.

Лопахин. Ӗлӗк пит аванччӗ. Ҫаптаратчӗҫ—кирлӗ пулсан.

Фирс (*мӗн каланине илтеймесӗр*). Ҫапла пулмасӑр ара. Мужиксем улпутсем ҫумӗнче, улпучӗсем мужиксем ҫумӗнчеччӗ, халь пурте сапаланса кайнӑ, нимӗн те ӑнланма ҫук.

Гаев. Ан чен-ха, Фирс. Ман ыран хулана каймалла. Пӗр генералпа паллаштарма пулчӗҫ, вексельпе укҫа пама пултарать, тет, вӑл.

Лопахин. Нимӗн те тухмасть сирӗн. Процентсене пурӗпӗр тӳлейместӗр, лӑпланӑр.

Любовь Андреевна. Суйланать мар-и вӑл. Нимӗнле генералсем те ҫук ун.

Трофимов, Аня тата Варя кӗреҫҫӗ.

Гаев. Акӑ пирӗннисем килеҫҫӗ.

Аня. Анне ларать.

Любовь Андреевна (*ачашшӑн*). Килех, кил... Савнӑ ачамсем... (*Аняпа Варяна ыталаса*). Эсир иксӗр те, эпӗ сире мӗнле юрат-

нине пĕлсенччĕ. Ларăр ман çумма, ак çапла. (*Пурте лараççĕ*).

Л о п а х и н. Пирĕн ĕмĕрхи студент ялан хĕрсемпе çӳрет.

Т р о ф и м о в. Сирĕн ĕç çук.

Л о п а х и н. Кĕç 50 çула çитет, а вăл çаплах студент.

Т р о ф и м о в. Пăрахăр ухмахла шӳт тума.

Л о п а х и н. Мĕн çиленетĕн эсĕ, чудак?

Т р о ф и м о в. А эс ан сыпçăн.

Л о п а х и н (*кулать*). Ыйтма ирĕк парăр мана, мĕнле ăнланатăр эсир мана?

Т р о ф и м о в. Эпĕ, Ермолай Алексеич, çапла ăнланатăп: эсир пуян сын, кĕçех миллионер пулатăр. Çутçанталăкри япаласене улшăнса пыма тискер кайăк кирлĕ, вăл хăй çулĕ çинче мĕне тĕлпулать, çавна çисе ярать, эсĕ те çав тискер кайăк пекех кирлĕ. (*Пурте кулаççĕ*).

В а р я. Петя, эсир пире планетăсем çинчен каласа парăр-ха луччĕ.

Л ю б о в ь  А н д р е е в н а. Çук, ĕнерхи калаçăвах тăсăпăр.

Т р о ф и м о в. Мĕн çинчен вăл?

Г а е в. Мăнаçлă сын çинчен.

Т р о ф и м о в. Ĕнер эпир нумайччен калаçрăмăр, анчах ним çинче те чарăнса тăраймарăмăр. Сирĕн шухăшăрпа, мăнаçлă сынра темскер, мистикăлла ĕненни пур. Пулма култа-

рать, хăвăр шухăшăрпа эсир тĕрĕс те-и тен, анчах уçăмлăрах, урлă-пирлĕ вылянмасăр сӳтсе-явсан, мĕн мăнаçлăхĕ пултăр унта, этем тени физиологи енĕпе ахаль те пулсах çитеймен-тĕк, этемсенчен нумайĕшĕ йăваш мар, ăслă мар, çав тери телейсĕр пулсан,—мĕн усси пур-ши ĕнтĕ унăн мăнаçлăхĕнче. Харпăр хăй çине пăхса килленме пăрахас пулать. Ĕçлеме тытăнмалла çеç.

Гаев. Пурĕпĕр вилетĕн.

Трофимов. Кам пĕлет? Мĕн тени пулать вăл,—вилен тени? Тен, этемĕн çĕр тĕрлĕ сисĕм, тен, вăл вилсен, эпир пĕлекен сисĕмсенчен пиллĕкĕшĕ çеç вилеççĕ, тен, ыттисем, тăхăрвун пиллĕкĕшĕ чĕрех юлаççĕ.

Любовь Андреевна. Епле ăслă эсир, Петя!..

Лопахин (*мăшкăласа*). Çав тери!

Трофимов. Этемлĕх, хăйĕн вăйне аталантарса, малаллах пырать. Хальхи вăхăтра çав тери инçетре пек, алла илме май çук пек туйăнакан япаласемех уншăн, хăçан та пулин çывăх, ăнланмалла пулса тăрĕç, анчах вăт ĕçлес пулать, чăнлăх шыракансене мĕнпур вăйран пулăшас пулать. Пирĕн, Российăра, халлĕхе ĕçлекенсем пит сахал-ха. Эпĕ пĕлекен интеллигенцирен нумайĕшĕ нимĕн те шырамасть, нимĕн те тумасть, халлĕхе вăл ĕçе

юрăхлă мар-ха. Хăйсене интеллигенци теççĕ, анчах тарçисене „эсĕ“ теççĕ, мужиксем çине, выльăх çине пăхнă пек пăхаççĕ, начар вĕренеççĕ, чăнласа ним те вуламаççĕ, пачах нимĕн те тумаççĕ, наукăсем çинчен калаçаççĕ çеç, искусствăна сахал ăнланаççĕ. Пурте тарăн шухăшлă, сăн-пичĕсем çинче шўт тума юратманни курăнать, пурте чи кирли çинчен çеç калаçаççĕ, философ пулса кайнă, анчах çав хушăрах, пирĕнтен нумайĕшĕ, çĕртен тăхăрвун пиллĕкĕшĕ, тискер кайăкла этем пек пурăнаççĕ, кăшт кăна мĕн те пулин пулчĕ пулсан — пĕр-пĕрне янахран тăхăнтараççĕ, çиесс тўсме çук начар çиеççĕ, çывăрасса пылчăк çинче, сывлама çук пăчă çĕрте çывăраççĕ, ăçта пынă унта хăнкăла, пăнтăх, нўрлĕх, ăс-хакăлĕ енĕпе тасамарлăх... Пирĕн чипер калаçусем ахальрен çеç, пĕр-пĕрин куç умне пуласран, пĕр-пĕрне аяккалла сирсе яма çеç кирлĕ пулмалла. Кăтартăр мана, яслисем ăçта пирĕн, вĕсем çинчен çав тери нумай тата час-час калаçаççĕ вĕт-ха, вуламалли çуртсем ăçта? Вĕсем çинчен романсем çине çеç çыраççĕ, пурнăçра çук вĕсем. Пурнăçра тасамарлăх, ирсĕрлĕх, азиатщина çеç... Шўт тума юратманнине палăртакан сăн-питсенчен хăратăп эпĕ, çав тери юратмастăп эп вĕсене, тимлĕ калаçуран та хăратăп. Шарлас мар луччĕ!

Лопахин. Пĕлетĕр-и, ирхине эпĕ пилĕк сехетре тăратăп та, иртен пуçласа касченӗх ĕçлетĕп, ман алăра яланах хам укçа та, ют çын укçи те пулкалать, хам таврара мĕнле çынсем иккенне куратăп эпĕ. Тӳрĕ тата путлĕ çынсем çав тери сахал иккенне ăнланас тесен, мĕн те пулин тума пуçламалла çеç. Хăш чухне вара, çывăрас килмен чухне, шухăшлама пуçлап: „турăçăм, тетĕп, эсĕ пире çав тери пысăк вăрмансем, вĕçĕ-хĕррисĕр хирсем, таçта инçетре курăнса выртакан горизонтсем туса патăн, çакăнта пурăннă хушăра, чăннипе, пирĕн хамăрăн улăп пек великансем пулса тăмалла...“

Любовь Андреевна. Сире великансем кирлĕ пулчĕç... Вĕсем юмахсенче çеç аван, ахаль çĕрте вĕсем хăратаççĕ.

Сцена урлă, шаларахран, Епиходов иртсе каять, вăл гитара калать.

Любовь Андреевна (*шухăша кайса*). Епиходов пырать...

Аня (*шухăша кайса*). Епиходов пырать...

Гаев. Хĕвел анчĕ, господа.

Трофимов. Да.

Гаев (*хытах мар, сăвă вуланă пекрех*). О, çутçанталăк, тĕлĕнтермĕш, эсĕ ĕмĕр-ĕмĕр çиçсе, йăлтăртатса тăратăн, эсĕ илемлĕрен те илемлĕ, тӳлек, эсĕ, эпир хамăр аннемĕр

текенскер, хăвăнта пурнăçпа вилĕме пĕтĕçтерсе тăратăн, эсĕ чĕрĕлĕх паратăн, эсех ăна ишсе антаратăн...

Варя (*ӳкĕтлесе*). Пиччеçĕм!

Аня. Кукка, каллех эсĕ!

Трофимов. Эсир луччĕ саррине дуплетпа варрине кĕртсе ярăр.

Гаев. Шарламăп-çке, шарламăп.

Пурте ларaççĕ, шухăша кайнă. Шăп. Пĕр **Фирс** хуллен мăкăртатса ларни çеç илтĕнет. Сасартăк инçетре сасă илтĕнсе каять, вăл пĕлĕт çинчен илтĕннĕ пек, хĕлĕх татăлнă чухне янăраса каякан, - шăпланса пыракан хурлăхлă сасă.

Любовь Андреевна. Мĕн ку?

Лопахин. Пĕлместĕп. Ăçта та пулин инçетре шахтăра бадья татăлса анчĕ пулас. Анчах ăçта та пулин пит инçетре.

Гаев. Тен, пĕр-пĕр кайăк пулĕ... чарлан йышши.

Трофимов. Е ӳхĕ ӳхĕрет...

Любовь Андреевна (*çӳçенсе илет*). Аван мар, темшĕн. (*Пауза*).

Фирс. Инкек пулас умĕн те çапла пулсаччĕ: тăмана кăшкăрни тата самовар улани илтĕнсеччĕ.

Гаев. Мĕнле инкек пулас умĕн?

Фирс. Ирĕке ярас умĕн. (*Пауза*).

Любовь Андреевна. Пĕлетĕр-и, тусăмсем, каяр пуль, каç пулса килет. (*Аняна*). Сан куçусенчен куççуль юхать... Мĕн эсĕ, хĕрĕм? (*Аняна ыталать*).

Аня. Ахаль вăл, нимех те мар.

Трофимов. Такам килет.

Киввеле пуçланă шурă картус тăхăннă Иртен-çӳрен курăнать. Вăл пальтопа; кăшт ӳсĕртерех.

Иртен-çӳрен. Сирĕнтен ыйтса пĕлме юрать-и, ак çакăнтан кайсан тӳрех станцие тухма пулать-и?

Гаев. Тухма пулать. Ак çак çулпа кайăр.

Иртен-çӳрен. Чĕререн тав сире. (*Ӳсерсе илсе*). Çанталăкĕ пит аван вара... (*Сăвă вулать*). Тăванăм, асаплă тăванăм... Тух Атăл çине, кам йынăшнă сасă... (*Варяна*). Мадемуазель, выçă Россия çыннине пĕр вăтăр пус параймăр-ши...

Варя, хăраса ӳксе, шари кăшкăрса ярать.

Лопахин (*силенсе*). Кашни киревсĕрлĕхĕнех хăйне тивĕç виçи пулма кирлĕ.

Любовь Андреевна (*ним тума аптăраса*). Илĕр... ак сире... (*Пăртманикĕнче шырать*). Кĕмĕл çук... Пурĕпĕр, ак сире ылттăн...

Иртен-çӳрен. Чĕререн тав сире! (*Тухса каять*).

Варя (*хăраса ÿкнĕ*). Каятăп эпĕ... каятăп. Ах, аннеçĕм, килте сынсен çимелли çук, эс ăна ылттăн паран.

Любовь Андреевна. Мĕн тăвăн ĕнтĕ манпа, ухмахпа! Эпĕ сана, киле таврăнсан, хамăн мĕн пуррине йăлтах парăп. Ермолай Алексеевич, татах кивçен паратăр-и эсир мана?

Лопахин. Итлетĕп.

Любовь Андреевна. Кайăпăр, господа, вăхăт ĕнтĕ. Кунта эпир, Варя, сана качча парас пирки калаçса татăлтăмăр, саламлатăп.

Варя (*куççуль витĕр*). Унпа шÿт тумаççĕ, анне.

Лопахин. Охмелия, кай монастыре...

Гаев. Ман алăсем чĕтреççĕ: нумай пулать биллиардла выляманни.

Лопахин. Охмелия, о нимфа, асăнсам мана хăвăн кĕллÿсенче!

Любовь Андреевна. Кайăпăр, господа, кĕçех каçхи апат çиме вăхăт.

Варя. Хăратса пăрахрĕ вăл мана. Чĕре сиксех тухать.

Лопахин. Аса илтеретĕп сире, господа: августăн 22-мĕшĕнче чие садне сутаççĕ. Шухăшлăр çавăн çинчен!.. Шухăшлăр!..

**Трофимовпа Аняран** пуçне пурте тухса каяççĕ.

Аня (*кулса*). Спасибо çулçÿрене, Варяна хăратрĕ, халь ĕнтĕ эпир иксĕмĕрех.

Трофимов. Варя вӑл, эпир пӗр-пӗрне юратса пӑрахасран хӑрать, кунӗ-кунӗпе пирӗн хыҫҫӑн ҫӳрет, ниҫта уйӑрӑлмасть. Вӑл хӑйӗн ӑнсӑр пуҫӗпе эпир юратуран ҫӳлте тӑнине ӑнланса илме пултараймасть. Ирӗклӗ те телейлӗ пулма чӑрмантаракан вак-тӗвекрен, куҫа курӑнна пек туйӑнакан мӗлкесенчен аяккала пӑрӑнасси—акӑ мӗн вӑл пирӗн пурнӑҫӑн тӗллевӗпе тӗп шухӑшӗ. Малалла! Эпир пӗр чарӑнса тӑмасӑр ҫап-ҫутӑ ҫӑлтӑр патне, таҫта инҫетре ҫиҫсе тӑракан ҫӑлтӑр патне каятпӑр! Малалла! Ан юлӑр, тусӑмсем!

Аня (*хӑлаҫланса*). Епле аван калатӑр эсир! (*Пауза*). Паян кунта тӗлӗнмелле аван!

Трофимов. Тӗрӗс, «анталӑкӗ тӗлӗнмелле.

Аня. Мӗн турӑр эсир манпа, Петя, мӗншӗн эпӗ чие садне ӗлӗкхи пек юратми пултӑм. Эп ӑна чӗререн юрататтӑм, пирӗн садри пек илемлӗ вырӑн тӗнчипе те ҫук пек туйӑнатчӗ мана.

Трофимов. Пӗтӗм Россия пирӗн сад. Ҫӗр ҫав тери пысӑк, ҫав тери илемлӗ, ун ҫинче тӗлӗнмелле вырӑнсем нумай. (*Пауза*). Шухӑшлӑр-ха, Аня: сирӗн асаҫу, асаҫу ашшӗ, ӗлӗк-авал вилсе пӗтнӗ тӑванӑрсем пурте крепостниксем пулнӑ; пурте вӗсем чӗрӗ чунсене тытса усранӑ, неушлӗ ҫак садри кашни чие ҫырли ҫинчен, кашни ҫулҫӑ ҫинчен, кашни

йăвăç вулли çинчен этем кӳлеписем пăхмаççĕ сирĕн çине, неушлĕ илтместĕр эсир вĕсен сассисене... О, хăрушла вăл, сирĕн сад хăрушă, каçхине е çĕрле, сирĕн сад тăрăх иртсе пынă чухне, йăвăççен кивелсе кайнă хупписем тĕксĕмĕн çутăлса тăраççĕ, вара, чие çырли йăвăççисем тĕлĕх курнăн туйăнаççĕ, вĕсем çĕр çул, икçĕр çул ĕлĕкрех мĕнмĕн пулнине кураççĕ пек, çав йăвăр тĕлĕксем вĕсене канăç памаççĕ пек. Мĕн калăн ĕнтĕ! Эпир, сахалран та, пĕр икçĕр çул кая юлнă, халлĕхе пирĕн нимĕн те çук-ха, ĕлĕкхи çине мĕнле пăхма кирлине те татăклăн каласа пама пултараймастпăр эпир, философла калаçни çеç вĕт пирĕн, эпир кичем тесе ӳпкелешетпĕр е эрех ĕçетпĕр. Уççăнах курăнса тăрать вĕт-ха: хальхи пурнăçпа пурăнма пуçлас тесен, малтан пирĕн ĕлĕкхине пĕтерес пулать, анчах ăна асап курнипе çеç, вĕçĕмсĕр тимлесе ĕçленипе çеç пĕтерме пулать. Ăнланăрсам çакна, Аня.

Аня. Эпир пурăнакан çурт—тахçанах пирĕн çурт мар ĕнтĕ, çавăнпа эпĕ каятăп, сăмах паратăп сире.

Трофимов. Сирĕн аллăрта хуçалăх çăраççийĕсем пур пулсан, эсир вĕсене çăла пăрахăр та тухса кайăр. Çил пек ирĕклĕ пулăр.

Аня (*хавасланса*). Пит аван каларăр-çке эсир!

Трофимов. Ёненĕр мана, Аня, ёненĕр! Эпĕ çамрăк, вăтăра та çитеймен вĕт-ха эпĕ, эпĕ студент, анчах эп мĕн чухлĕ чăтса ирттернĕ-ши! Хĕлле пулчĕ-тĕк, выçă эпĕ, чирлĕ, ăш вăркама пуçлать, ыйткалакан пекех чухăн,—ăçта-ăçта çитермен-ши мана пурнăç, ăçта-ăçта пулман-ши эпĕ! Çапах та ман чунăм кирек хăçан та, хуть хăш самантра та, кăнтăрла-и, çĕрле-и, пурĕпĕр, яланах ăнланма çук сисĕмсемпе тулли. Телей пуласса сисетĕп, Аня, куçпах куратăп эп ăна...

Аня (*шухăша кайса*). Уйăх хăпарать.

Епиходов гитара калани илтĕнет; вăл çав хурлăхлă кĕввех вылять. Уйăх хăпарать. Таçта, топольсем патĕнче, **Варя, Аняна** шыраса: „Аня! Аçта эсĕ?" тесе чĕнет.

Трофимов. Да, уйăх хăпарать. (*Пауза*). Ак вăл телей, акă килет, çывхарнăçемĕн çывхарсах килет, эп вăл утнă сасса илтетĕп. Ытах эпир кураймасан ăна, эпир палласа илеймесен,—мĕнех вара уншăн? Ăна урăххисем курĕç!

Варя сасси. Аня! Ăçта эсĕ?

Трофимов. Каллех Варя! (*Çиленсе*). Тўсме çук мăшкăл.

Аня. Мĕнех вара? Айтăр шыв хĕррине. Унта аван.

Трофимов. Кайăпăр эппин. (*Каяççĕ*).

Варя сасси. Аня! Аня!

Чаршав

# ВИҪҪЁМЁШ ПАЙЁ

Хăна пӳлĕмĕ, ăна залран аркăпа уйăрнă. Ҫутса янă люстра. Малти пӳлĕмре II-мĕш пайра асăннă еврейсен оркестрĕ выляни илтĕнет. Каҫ. Залра grand rond ташлаҫҫĕ. Симеонов - Пищик сасси:—„Promenade à une paire!" Хăна пӳлĕмне тухаҫҫĕ: пирвайхи мăшăрта—**Пищикпе Шарлотта Ивановна,** иккĕмĕшĕнче—**Трофимофпа Любовь Андреевна,** виҫҫĕмĕшĕнче—**Аняпа почта чиновникĕ,** тăваттăмĕшĕнче—**Варяпа станци начальникĕ** т. ыт. **Варя** шăппăн йĕрет, ташланă май, куҫҫульне шăлать. Юлашки мăшăрта **Дуняша.** Хăна пӳлĕмĕ тăрăх утаҫҫĕ, **Пищик** кăшкăрать: „Grand rond, balancez!"

> **Фирс** фракпа, подноспа сельтер шывне ҫĕклесе иртсе каять.
> Хăна пӳлĕмне **Пищикпе Трофимов** кĕреҫҫĕ.

Пищик. Юн нумай ман, икĕ хутчен ĕнтĕ ăнсăр пулса выртрăм, ташлама йăвăр, ҫынсем калашле, йытă ушкăнне лекрĕн-тĕк вара, хăть вĕр, хăть ан вĕр, анчах хӳрӳне вылят. Сывлăхĕ ман лашанни пек. Ман атте, шутникскер, ҫӳлти патшалăх пултăр ăна, пирĕн авалхи

йăх çинчен çапла калатчĕ: пирĕн йăх, Симеонов-Пищиксен йăхĕ, Калигула патша сената кĕртсе лартнă лашаран пуçланса кайнă пулать... (*Ларать*). Вăт инкек: укçа çук! Выçă йытă аш татăкне ĕненет... (*Харлаттарма пуçлать те çав самантрах вăранать*). Эпĕ те çăвнашкалах.. укçа çинчен çеç...

Трофимов. Кĕлеткерен пăхсан, эсир чăнахах та темскерле, лаша пекрех курăнатăр.

Пищик. Мĕнех вара... лаша аван выльăх... лашана сутма пулать...

Юнашар пӳлĕмре биллиардла выляни илтĕнет. Залра арка айĕнче **Варя** курăнать.

Трофимов (*витлет*). Мадам Лопахина! Мадам Лопахина!..

Варя (*силенсе*). Çаралса юлнă улпут!

Трофимов. Тĕрĕс, эп çаралса юлнă улпут, унпа эпĕ мухтанма тивĕç!

Варя (*хурланчăклăн, шухăша кайса*). Музыкантсене чĕнтерчĕç ак, анчах мĕнпе тӳлемелле-ши? (*Тухса каять*).

Трофимов (*Пищике*). Эсир хăвăр пурнăçăрта процент тӳлеме укçа шыраса пĕтернĕ вăйăра ăçта та пулин урăх çĕре янă пулсан, халиччен çĕре те тепĕр майлă çаврса хума пултарнă пулăттăр-и тен.

Пищик. Ницше... философ... асларан та аслă, çав тери чаплă çын... пит ăслă çын,

хайён сочиненийёсенче каланă тăрăх, фальшивăй хутсем тума пулать имёш.

Трофимов. Ниçшене вуланă-им эсир?

Пищик. Ну... Дашенька каларĕ мана. Халь ак ман ĕçсем çаплалла, фальшивăй хутсем тума тытăн хăть... Виçмине 310 тенкĕ тӳлемелле... 130-шне тупрăм ĕнтĕ... (*Кĕсъисене хыпашласа пăхать, сасартăк хыпăнса ӳкет*). Укçа çухалнă! Çухатрăм вĕт укçана! (*Куççуль витĕр*). Ăçта укçа? (*Савăнăçлăн*). Акă вăл, подкладка айĕнче... Тарлаттарсах ячĕ...

**Любовь Андреевнăпа Шарлотта Ивановна кĕреççĕ.**

Любовь Андреевна (*лезгинка кĕввине ĕнерсе*). Мĕншĕн час килмерĕ вăл Леонид? Мĕн тăвать вăл хулара? (*Дуняшăна*). Дуняша, музыкантсене чей ĕçтер-ха...

Трофимов. Торги пулайман пулмалла.

Любовь Андреевна. Музыканчĕсем те вăхăтсăр килсе кĕчĕç, балне те вăхăтсăр шухăшласа кăлартăмăр... Ну, юрĕ-çке... (*Ларать те хуллен юрлать*).

Шарлотта (*Пищике карт колоди парса*). Акă сире карт, çак картсенчен пĕрне палăртса хурăр та, хăшне палăртса хунине мана ан калăр, ăшра тытăр.

Пищик. Палăртса хутăм.

Шарлотта. Халь ĕнтĕ хутăштарăр. Пит аван. Парăр кунта, о, савнă господин Пищик.

Ein, zwei, drei! Халь ёнтĕ шыраса пăхăр, вăл сирĕн айăкри кĕсъере пулма кирлĕ...

П и щ и к (*айăкри кĕсъерен карт кăларать*). Восьмерка пик, пит те тĕрĕс! (*Тĕлĕнсе*). Шухăшлăр-ха эсир!

Ш а р л о т т а (*ывăçĕ çинче карт колоди,— Трофимова*). Калăр хăвăртрах, чи çиелте мĕнле карт?

Т р о ф и м о в. Мĕнех вара? Ну, пик дама.

Ш а р л о т т а. Есть! (*Пищика*). Ну? Чи çиелте мĕнле карт?

П и щ и к. Червовăй туз.

Ш а р л о т т а. Тĕрĕс... (*Ывăç тупанне çапса илет те, карт колоди çухалать*). Мĕн тери аван çанталăк паян! (*Ăна хирĕç темле, тĕпсакайĕнчен илтĕннĕ пек туйăнакан хĕрарăм сасси тавăрса калать: „О, çанталăкĕ çав тери аван, сударыня"*). Эсир ман ытарма çук идеалăм... (*Сасă: „Эсир те, сударыня, ман кăмăла каятăр"*).

С т а н ц и   н а ч а л ь н и к ĕ (*алă çупать*). Ăшра мĕн пуррине пĕлсе калакан госпожа ку, браво!

П и щ и к (*тĕлĕнсе*). Шухăшлăр-ха эсир! Ытарайми Шарлотта Ивановна... эпĕ сире юратса пăрахрăм...

Ш а р л о т т а. Юратса пăрахрăм? (*Хулпуççийĕсене хутлатса*). Юратма пултаратăр-и мĕн эсир?

Трофимов (*Пищике хулпуççийĕнчен лăп-каса*). Лаша темерĕн çав...

Шарлотта. Кунталла пăхма ыйтатăп, тата тепĕр фокус. (*Пукан çинчен плед илет*). Акă, çав тери аван плед, эпĕ ăна сутас тетĕп... (*Силлет*). Камăн та пулин туянас кăмăл çук-и?

Пищик (*тĕлĕнсе*). Шухăшлăр-ха эсир!

Шарлотта. Ein, zwei, drei! (*Аялалла усăнса тăракан пледа хăвăрт çĕклет; плед хыçĕнче Аня тăрать, вăл реверанс тăвать, амăшĕ патне чупса пырать, ăна ыталаса илет те хăвăрт зала тухса çухалать, пурте хавасла*).

Любовь Андреевна (*алă çупать*). Браво, браво!..

Шарлотта. Халь ак тата тепре! Ein, zwei, drei! (*Пледа çĕклет; плед хыçĕнче Варя тăрать, пуç таять*).

Пищик (*тĕлĕнсе*). Шухăшлăр-ха эсир!

Шарлотта. Пĕтертĕм! (*Пледне Пищик çинелле ывăтса ярать, реверанс тăвать те зала чупса каять*).

Пищик (*ун хыççăн васкаса утать*). Тухатмăш... епле вăл? Епле? (*Тухса каять*).

Любовь Андреевна. А Леонид çаплах çук-ха. Ăнланмастăп эпĕ, мĕн тăвать-ши вăл çак таранччен хулара! Ĕç пĕтнĕ вĕт ĕнтĕ унта, имение сутнă-и, е торги пулайман-и,—кирек

мĕн пулсан та, мĕншĕн-ха ҫак таранччен пĕлтермелле мар вăл!

Варя (*ăна лăплантарма тăрăшса*). Пиччех туяннă ĕнтĕ, эп ăна шансах тăратăп.

Трофимов (*мăшкăларах*). Да.

Варя. Мăнаппа ăна доверенность ярса панă, вăл ăна хăй ячĕпе туянма хушнă, укҫине кайран яма пулнă. Вăл ăна Аня валли туянать. Эп шансах тăратăп, турă пулăшсан, пичче туянатех.

Любовь Андреевна. Ярославльри мăнаппу вунпилĕк пин ярса панă, имение хăй ячĕпе илмĕ хушнă,—епле вăл пире шанмасть,—вăл янă укҫа процент тӳлеме те ҫитейрес ҫукчĕ. (*Аллисемпе питне хуплать*). Паян ман малашнехи пурнăҫăм мĕнле пуласси палăрать, татăклăнах палăрать...

Трофимов (*Варяна витлет*). Мадам Лопахина!

Варя (*ҫиленсе*). Ĕмĕрхи студент! Университетран икĕ хут кăларса янă ĕнтĕ.

Любовь Андреевна. Мĕншĕн ҫиленетĕн эсĕ, Варя? Вăл сана Лопахина тесе витлет, мĕнех вара? Кăмăлу пулсан—Лопахина тух, вăл аван, интереснăй ҫын. Тухас кăмăлу ҫук пулсан—ан тух: сана никам та ирĕксĕрлемест...

Варя. Эп вăл ĕҫ ҫине шӳт туса пăхмас-

тăп, аннеçĕм, тўрех калас пулать. Çынни аван вăл, эп ăна килĕштеретĕп.

Любовь Андреевна. Ăнланмастăп эпĕ, мĕн кĕтсе тăмалли пур-ши! Тух ара.

Варя. Аннеçĕм, эп ăна, эс мана качча ил, теме пултараймастăп вĕт-ха. Ак ĕнтĕ икĕ çул хушши пурте ун çинчен калаççĕ мана, пурте калаççĕ, анчах вăл е нимĕн те чĕнмест, е шўт тăвать çеç. Ăнланатăп эпĕ. Вăл пуйса пырать, ĕç нумай ун, манпа аппаланма вăхăт çук. Укçа пулнă пулсан, кăшт çеç пултăр хăть, çĕр тенкĕ çеç, йăлтах пăрахса кайăттăм, инçете-инçете. Монастыре кайăттăм.

Трофимов. Сăваплă, чаплă ĕç!

Варя (*Трофимова*). Студентăн ăслă пулмалла! (*Йăвашшăн, куççулĕ витĕр*). Епле чипермарланса кайнă эсир, Петя, епле ватăлса кайнă! (*Любовь Андреевнăна, халь ĕнтĕ йĕмесĕрех*). Анчах вăт ĕççĕр пурăнма пултараймастăп, аннеçĕм. Кашни минутрах мĕн те пулин тăвас килет.

Яша кĕрет.

Яша (*кĕç-вĕç кулса ярас пек*). Епиходов бильярд кийне хуçса пăрахрĕ!.. (*Тухса каять*).

Варя. Епиходов мĕн туса çўрет тата кунта? Кам ирĕк панă ăна бильярдла выляма? Ăнланмастăп вăл çынсене... (*Тухса каять*).

Любовь Андреевна. Ан витлĕр ăна, Петя, хăвăрах куратăр вĕт, унсăр пуçнех хуйхă ун.

Трофимов. Ытлашши тимлĕ вăл, çын ĕçне хутшăнма юрататъ. Çăвĕпех канăç памарĕ вĕт пире, ни Аняна, ни мана, пирĕн хушăмăрта роман пуçланса каясран хăратъ. Ăна мĕн ĕç? Çитменне тата эп ăна-кăна нихăш енчен те палăртман, ирсĕрлĕхрен çав тери инçетре тăратăп эпĕ. Эпир юратуран çӳлте тăратпăр!

Любовь Андреевна. А эпĕ вăт, юратуран аялта тăратăп пулас. (*Хытă пăлханса*). Мĕншĕн килмерĕ-ха вăл Леонид? Пĕлесчĕ çеç: имение сутнă-ши, сутман-ши? Инкек пуласса çав тери ĕненес килмест ман„ темскерле, хам та пĕлместĕп, тем шухăшламалла, çухалса кайрăм ĕнтĕ... Халь эпĕ кăшкăрса яма пултаратăп... пĕр-пĕр ухмахла ĕç туса хума та пултарап. Петя, çăлăр мана. Калăрсам ĕнтĕ мĕн те пулин, калăр...

Трофимов. Имение сутнă-и унта паян, сутман-и—пурĕпĕрех мар-и мĕн? Такçанах ĕç пĕтнĕ ĕнтĕ унпа, каялла таврăнма çук, çулĕ кĕççеленсе ларнă. Лăпланăр, хаклă тусăм, хăвăра хăвăр улталама кирлĕ мар, пурнăçра та пĕрре те пулин чăнлăха хирĕç тăрса куçран пăхасах пулать ĕнтĕ.

Любовь Андреевна. Мĕнле чăнлăха? Эсир чăнлăха куратăр, вăл ăçта пуррине тата ăçта çуккине курма пултаратăр, а эпĕ, суккăрпа пĕрех, нимĕн те курмастăп. Чи кирлĕ ыйтусене эсир хăюллă татса хуратăр, анчах калăр-ха, тусăм, вăл эсир çамрăкран, хăвăр ыйтăвăрсенчен пĕрне те чăтса ирттерме ĕлкĕрейменрен килмест-ши? Эсир малалла та хăюллăн пăхатăр, анчах вăл эсир курман пирки, нимĕнле хăрушлăх пуласса кĕтмен пирки, пурнăç тени сирĕн çамрăк куçăрсене курăнман пирки мар-ши? Эсир хăюллăрах, тӳрĕрех, пирĕнтен тарăнрах,—анчах шухăшласа пăхăр-ха, пӳрнĕр вĕçĕпе те пулин ырă кăмăлла пулăрсам ĕнтĕ, хĕрхенĕр мана. Эпĕ, вĕт, кунта çуралнă, кунта ман атте-анне, асатте пурăннă, юрататăп эп çак çурта, чие сачĕсĕр пуçне хам пурнăçа ăнланаймастăп, çапла пулса тухрĕ пулсан ĕнтĕ, сутмаллах пулсан, мана хама та садпа пĕрлех сутăр... (*Трофимова ыталать, çамкинчен чуптăвать*). Кунта вĕт ман ывăл ача путса вилнĕ... (*Йĕрет*). Хĕрхенĕр мана, ырă çыннăм.

Трофимов. Эсир пĕлетĕр, эпĕ сире пĕтĕм чунтан хĕрхенетĕп.

Любовь Андреевна. Анчах урăхларах, урăхларах каламаллаччĕ сирĕн куна... (*Тутăрне кăларать, урайне телеграмма тухса ӳкет*). Паян мана çав тери йăвăр, чун тăвă-

нать, эсир ман ӑшра мӗн пулса иртнине ӑнланма пултарас ҫук. Кунта шавлаҫҫӗ, кашни сас-чӗв ҫӳҫентерет вӗт чуна, эп чӗтретӗп, анчах хам пӳлӗме кӗрсе ларма пултараймасскӑп, пӗччен мана—шӑплӑхра пушшех те хӑрушӑ. Ан айӑплӑр мана, Петя... Эпӗ сире, тӑван ывӑлӑма юратнӑ пекех, юрататӑп. Эпӗ сире Аняна качча пама та хавас, тупа тӑватӑп сире, анчах, ырӑ тусӑм, вӗренес пулать вӗтха, вӗренсе тухасах пулать. Эсир нимӗн те тумастӑр, пурнӑҫ ҫеҫ сире вырӑнтан вырӑна илсе пырса пӑрахать, ҫав тери тӗлӗнмелле... Тӗрӗс мар-и-мӗн? Ҫапла вӗт? Тата сухалӑрпа мӗн те пулин тӑвасах пулать вӗт, ӳстӗр вӑл мӗнле те пулин... (*Кулать*). Кулӑшла эсир!

Трофимов (*телеграммӑна илсе*). Ман хитре пулас кӑмӑлӑм ҫук.

Любовь Андреевна. Ку телеграммӑна Парижран янӑ. Кашни кун илетӗп. Ӗнер те, паян та. Ҫав тискер этем каллех чирленӗ, каллех аван мар ӑна... Каҫару ыйтать, хӑй патне пыма йӑлӑнать, тӗрӗссипе илсе пӑхсан, халь ман Парижа кайса килмелле, ун ҫумӗнче лармалла. Петя, эсир ман ҫине ҫиленсе пӑхатӑр, анчах мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ, ырӑ тусӑм, мӗн тӑвас ман, вӑл чирлӗ, тӑр пӗччен, телейсӗр, кам пӑхӗ ӑна, кам тытса чарӗ ӑна йӑнӑш тӑвасран, кам вӑхӑтра эмел ӗҫтерӗ. Мӗн пытармалли е шарламасӑр тӑмалли

пур-ха унта, эп ăна юрататăп, вăл паллă. Юрататăп, юрататăп... Вăл ман мăйăмран çыхса янă чул, эп унпа шыв тĕпне путап, анчах юрататăп эп вăл чула, унсăр пурăнма пултараймастăп. (*Трофимов аллине чăмăртать*). Усал ан шухăшлăр, Петя, нимĕн те ан калăр мана, ан калăр...

Трофимов (*куççуль витĕр*). Турă ячĕпе ыйтатăп, каçарăр мана тӳррипе каланăшăн: çаратнă вĕт вăл сире!

Любовь Андреевна. Çук, çук, çук, кирлĕ мар апла калама... (*Хăлхисене хуплать*).

Трофимов. Путсĕр вĕт-ха вăл, пĕр эсир çеç пĕлместĕр вăл путсĕррине! Вăл тӳсме çук путсĕр, ним тĕшне тăман этем вăл...

Любовь Андреевна (*çиленсе, анчах хăйне хăй пусарса*). Эсир 26-ра е 27-ре ĕнтĕ, анчах эсир халь те-ха иккĕмĕш класра вĕренекен гимназист пек калаçатăр!

Трофимов. Пулăпин!

Любовь Андреевна. Арçын пулас пулать, сирĕн çулсенче юратакан çынна ăнланас пулать ĕнтĕ. Хăвăрăн та юратас пулать... чĕререн юратмалла! (*Çиленсе*). Çапла ара, çапла! Тасалăх çук сирĕнте, эсир ахаль çеç, кулăшла чудак, катăк эсир...

Трофимов (*хăраса ӳксе*). Мĕн калать вăл!

Любовь Андреевна. „Эпĕ юратуран çӳлте!“ тетĕр. Юратуран çӳлте мар эсир, эсир, пирĕн Фирс калашле, пиçсе çитеймен пашалу çеç. Сирĕн çулсенче савнисĕр пурăнаççĕ-и!..

Трофимов (*хăраса ӳксе*). Çав тери хăрушă! Мĕн калать вăл?! (*Зал тăрăх хăвăрт утать, пуçне ярса тытнă*). Хăрушла ку... Пултараймастăп, каятăп эпĕ... (*Тухса каять, анчах çав самантрах каялла кĕрет*). Пирĕн хушăмăрта йăлтах пĕтнĕ! (*Малти пӳлĕме тухса каять*).

Любовь Андреевна (*кăшкăрать*). Петя, тăхтăр! Кулăшла этем, шӳт туса çеç вĕт эпĕ! Петя!

Малти пӳлĕмрен такам пусма тăрăх хăвăрт утни тата сасартăк кĕмсĕртетсе аялалла ӳкни илтĕнет. **Аняпа Варя** кăшкăрса ярасçĕ, анчах çав самантрах кулма пуçлаççĕ.

Любовь Андреевна. Мĕн унта?

**Аня** чупса кĕрет.

Аня (*кулса*). Петя пусма çинчен ӳкрĕ! (*Чупса тухса каять*).

Любовь Андреевна. Ытла чудак-çкеха çав Петя...

**Станци начальникĕ** зал варринче чарăнса тăрать те А. Толстой çырнă „Грешница“ произведение вулама пуçлать. Вăл вуланине

итлеççĕ, анчах нумай та вулама ĕлкĕрей-мест вăл, малти пӳлĕмрен вальс кĕвви илтĕнсе каять, вăл вулама чарăнать. Пурте ташлаççĕ. Малти пӳлĕмрен тухса — **Трофимов, Аня, Варя** тата **Любовь Андреевна** иртсе пыраççĕ.

Любовь Андреевна. Ну, Петя... ну, таса чун... каçару ыйтатăп... Айтăр танцовать тума... (*Петяпа танцовать тăвать*).

**Аняпа Варя** танцовать тăваççĕ. Фирс кĕрет, вăл хайĕн туйине аякран кĕмелли алăк патне тăратать. Хăна пӳлĕмĕнчен Яша кĕрет, вăл та танец çине пăхса тăрать.

Яша. Мĕнле пек, мучи?

Фирс. Чирлерĕм пулас. Ĕлĕк пирĕн балсенче генералсемпе баронсем, адмиралсем танцовать тăватчĕç, халь ав, почта чиновникĕпе станци начальникне чĕнме яра пуçларăмăр, вĕсем те пит килесшĕнех мар. Темскер, вăй пĕтсе çитрĕ. Ĕлĕк вилнĕ улпут, старик, пур тĕрлĕ чиртен те сургучпа сывататчĕ. Эп çирĕм çула яхăн ĕнтĕ кашни кун сургуч ĕçетĕп, çирĕм çул ытла та-и тен; кам пĕлет, çавна пула çеç пурăнатăп-и тен.

Яша. Йăлăхтарса çитертĕн эс, мучи. (*Анаслать*). Хăвăртрах вилесчĕ хăть сан.

Фирс. Эх, эс... пиçмен пашалу! (*Мăкăртатать*).

Трофимовпа Любовь Андреевна малтан залра, унтан хăна пӳлĕмĕнче танцовать тăваççĕ.

Любовь Андреевна. Мерси. Кăшт ларам-ха эпĕ... (*Ларать*). Ывăнтăм.

Аня кĕрет.

Аня (*пăлханса*). А халь кухняра темле çын, чие садне сутса ячĕç ĕнтĕ паян, тет.

Любовь Андреевна. Кама сутнă-ши?

Аня. Каламарĕ кама сутнине. Тухса карĕ. (*Трофимовпа танцовать тăвать, иккĕш те зала тухса каяççĕ*).

Яша. Темле старик пакăлтатса ларчĕ унта. Ют çын.

Фирс. Леонид Андреич çаплах çук-ха, таврăнаймарĕ. Çӳхе пальтопах тухса карĕ тата, деми-сезонпа çеç, простудицă пулĕ-и-ха. Эх, çамрăк çав-ха, симĕс.

Любовь Андреевна. Халех вилеп. Яша, чуп-ха, пĕлсе кил, кама сутнă.

Яша. Ара вăл старик паçăрах тухса карĕ. (*Кулать*).

Любовь Андреевна (*кăштах кăмăлсăрланса*). Ну, мĕнрен кулатăр эсир? Мĕне кура савăнатăр?

Яша. Епиходов пит кулăшла-çке-ха. Пушă этем. Çирĕм икĕ инкек.

Любовь Андреевна. Фирс, имение сутса ярсан, ăçта каяс тен эсĕ?

Фирс. Ăçта хушатăр, çавăнта каятăп.

Любовь Андреевна. Ма пит сăнсăрланса кайнă çак эсĕ? Сывă мар-и мен? Каяс та çывăрас пулать...

Фирс. Çапла... (*Мăшкăланă пекрех*). Эпĕ çывăрма каяп, анчах кунта мансăр пуçне кам хатĕрлесе парĕ, ĕçсене кам йĕркелĕ. Пĕтĕм килĕпе пĕр пĕччен.

Яша (*Любовь Андреевнăна*). Любовь Андреевна! Пĕр ыйту пирки хăвăрпа калаçма ирĕк парăр мана, ыр çын пулăр! Каллех Парижа каятăр пулсан, илсе кайăр мана хăвăрпа пĕрле, кăмăллă пулăр. Кунта юлма ман ниепле те май çук. (*Çаврăнса пăхса, çурма сасăпа*). Мĕн каламалли пур унта, хăвăрах куратăр, çĕршывĕ вĕренмен çынсемпе тулса ларнă, халăхĕн нимĕнле нравственность та çук, çитменне тата кичем, кухняра тӳсме çук начар çитереççĕ, унтах тата ак çак Фирс сĕтĕрĕнсе çӳрет, тĕрлĕрен килĕшӳсĕр сăмахсем мăкăртатать. Илсе кайăр мана хăвăрпа пĕрле, ырă çын пулăрсам ĕнтĕ!

Пищик кĕрет.

Пищик. Вальс ташлама чĕнме юрать-и сире... чипер пикеçĕм... (*Любовь Андреевна унпа пĕрле каять*). Ытарайми пикеçĕм, çав 180 тенке илетĕпех ĕнтĕ сирĕнтен... Илеп... (*Танцовать тăвать*). 180 тенкĕ... (*Зала кĕрсе каяççĕ*).

Яша (*хуллен юрласа илет*). „Ăнланăн-ши ман чун пăлханнине“.

Залра хăмăр цилиндр тата клеткăллă панталон тăхăннă этем курăнать, вăл аллисемпе сулкалать, сикет; кăшкăрнă сасăсем: „Браво, Шарлотта Ивановна!“

Дуняша (*питне пудра сĕрме чарăнса тăчĕ*). Барышня мана ташлама хушать—кавалерсем нумай, хĕрарăмсем сахал,—анчах ташланипе ман пуç çаврăнма пуçлать, чĕре те хăвăрт тапать, Фирс Николаевич, халь мана почтăри чиновник пĕр сăмах каларĕ, сăмахĕ те çав... сывлаймиех пулса лартăм.

Музыка шăпланать.

Фирс. Мĕн каларĕ-ха вăл сана?

Дуняша. Эсир чечек пек, тет.

Яша (*анаслать*). Киревсĕрлĕх... (*Тухса каять*).

Дуняша. Чечек пек... Эп çав тери çепĕç хĕр, ачаш сăмахсене питĕ юрататăп.

Фирс. Пуçна çавăраççĕ те-ха санне.

Епиходов кĕрет.

Епиходов. Авдотья Федоровна, эсир мана курасшăн та мар пулас... хурт-кăпшанкăпа пĕрех-и мĕн эп сирĕншĕн. (*Ассăн сывлать*). Эх, пурнăç!

Дуняша. Мĕн кирлĕ сире?

Е п и х о д о в. Паллах ĕнтĕ, эсир тĕрĕс тăватăр-и тен. (*Ассăн сывлать*). Анчах, паллах ĕнтĕ, çав енчен илсе пăхсан, эсир вара,— çапла калама хăям-ха, каçарăр тӳррипе каланăшăн,—эсир мана йăлтах çавăн пек туса хутăр. Хам фортунăна пĕлетĕп эпĕ, ман тĕллĕн кулленех мĕнле те пулин инкек сиксе тухать, ăна ĕнтĕ эп такçанах хăнăхса çитнĕ, çавăнпа ĕнтĕ эп хам пурăнăç çине кулса пăхатăп. Эсир мана сăмах патăр, эпĕ хăть...

Д у н я ш а. Чарăнма ыйтатăп, кайран каласăпăр, анчах халь мана ан чăрмантарăр. Халь эпĕ шухăшлатăп. (*Веерпа вылять*).

Е п и х о д о в. Ман тĕллĕн куллен инкек сиксе тухать, эпĕ çапах та, çапла калама хăям-ха, кулап кăна.

Залран **Варя** кĕрет.

В а р я. Эс çаплах кайман-и-ха, Семен? Чăн та, епле-ха эс сынна хисеплеме пĕлмен этем. (*Дуняшăна*). Тухса кай кунтан, Дуняша. (*Епиходова*). Е биллиардла выляса кий хуçса çӳрен, е хăна пӳлĕмĕ тăрăх уткаласа çӳрен, хăна пек.

Е п и х о д о в. Эсир манран, калама ирĕк парăр-ха, шыраса илме пултараймастăр.

В а р я. Шыраса илместĕп санран, калатăп çеç. Ахалех вырăнтан вырăна уткаласа

çӳрен, анчах ёçне туни çук. Конторщик тесе тытса усратпăр, анчах мĕн тума—паллă мар.

Епиходов (*кӳренсе*). Ёçлеп-и эп, утса çӳреп-и, çиеп-и, биллиардла вылятăп-и унта, ун çинчен ăнланма пултаракан çынсем кăна, аслисем çеç сăмах ваклама пултараççĕ.

Варя. Çапла калама хăятăн-и эс мана! (*Хĕрсе кайса*). Çапла калама хăятăн-и? Апла пулсан, эп нимĕн те ăнланмастăп пулать? Тухса кай эппин кунтан! Халех тухса кай!

Епиходов (*хăраса*). Эп сире тирпейлĕрех калаçма ыйтатăп.

Варя (*çиллине шăнараймасăр*). Халех тухса кайнă пултăр кунтан! Вон! (*Вăл алăк патнелле утать, Варя ун хыççăн*). Çирĕм икĕ инкек! Шăршу ан пултăр сан кунта! Куçăм ан куртăр сана! (*Епиходов тухать, алăк хыçĕнчен ун сасси илтĕнет: „Эп сирĕн çинчен жалоба паратăп“*). А, эс каллех кĕретĕн-и? (*Алăк патне Фирс тăратса хăварнă туяна ярса илет*). Кил-ха... Кил... Кил, кăтартăп эп сана... А, кĕретĕн-и-ха эсĕ? Кĕретĕн-и? Ак эппин сана... (*Туйипе сулса ярать, çав вăхăтра Лопахин кĕрсе тăрать*).

Лопахин. Тав сире капла кĕтсе илнĕшĕн.

Варя (*çиленсе, мăшкăларах*). Айăплă!

Лопахин. Нимех те мар. Кăмăллăн кĕтсе илсе хăна тунăшăн тав сире.

Варя. Тав тумалăхах пулмарĕ çав. (*Айăккарах пăрăнать, унтан каялла çаврăнса пăхса, йăвашшăн ыйтать*). Эпĕ сире суранламарăм пуль те?

Лопахин. Çук, нимех те пулман. Хăпарса тухасси, хăпарса тухать ĕнтĕ, пĕр чăх çăмарти пек.

Залри сасăсем. Лопахин килнĕ! Ермолай Алексеич!

Пищик. Куçпа пăхсан курăнать, хăлхапа итлесен илтĕнет. (*Лопахина чуптăвать*). Кăшт кăна коньяк шăрши кĕркелет санран, савнă тусăм, ырă чунăм. Эпир те ав кунта савăнатпăр.

**Любовь Андреевна** кĕрет.

Любовь Андреевна. Эсир-и ку, Ермолай Алексеич? Ма пит кая юлса килтĕр? Леонид ăçта?

Лопахин. Леонид Андреич манпа пĕрле килчĕ, кĕрет вăл...

Любовь Андреевна (*пăлханса*). Ну, мĕнле? Торги пулчĕ-и? Калăрсам часрах!

Лопахин (*нимле мар пулса, хăй савăнăçне палăртма хăраса*). Торги тăваттă тĕлне пĕтрĕ... Эпир поезд тапранса кайнă çĕре çитсе ĕлкĕреймерĕмĕр, тăххăр çурăччен кĕтмелле пулчĕ. (*Йăвăррăн сывласа илсе*). Уф! Ман кăштах пуç çаврăнать...

Гаев кӗрет; сылтӑм аллинче ун магазинра туяннӑ япаласем, сулахайӗпе вӑл куҫҫульне шӑлать.

Любовь Андреевна. Леня, мӗнле? Леня, ну? (*Чӑтса тӑраймасӑр, куҫҫулӗпе*). Каласам ӗнтӗ часрах, турӑ пул...

Гаев (*ӑна хирӗҫ ним те чӗнмест, аллипе сулать кӑна; Фирса—йӗре-йӗре*). Ил акӑ... Унта анчоуссем, керчь селедкисем... Паян эп нимӗн те ҫимен... Мӗн чухлӗ чӑтса ирттертӗм пуль! (*Биллиардла вылямалли пӳлӗм алӑкӗ уҫах тӑрать; шарсем пыра-пыра перӗннӗ сасӑ тата Яша сасси илтӗнет: „Ҫиччӗ те вунсаккӑр!“ Гаевӑн сӑнӗ улшӑнать, текех йӗмест ӗнтӗ вӑл*). Ҫав тери ывӑнтӑм. Фирс, улӑштарса тӑхӑнмалли пар-ха эс мана. (*Зал урлӑ каҫса, хӑй пӳлӗмне кӗрсе каять, ун хыҫҫӑн Фирс пырать*).

Пищик. Торгире мӗнле? Каласа парсам!

Любовь Андреевна. Сутса ячӗҫ-и чие садне?

Лопахин. Сутса ячӗҫ.

Любовь Андреевна. Кам илчӗ?

Лопахин. Эп илтӗм. (*Пауза*).

**Любовь Андреевна** лӑштӑрах каять; креслӑпа сӗтел патӗнче тӑман пулсан, вӑл кайса ӳкнӗ пулӗччӗ-и тен. **Варя** пиҫиххийӗ ҫинчи ҫӑраҫҫисене вӗҫерсе илсе ҫӗре пӑрахать те тухса каять.

Лопахин. Эп илтём! Тăхтăр-ха, господа, тăхтăр кăштах, ман пуçра пăтрашăнса кайрĕ, калаçма пултараймастăп... (*Кулать*). Пытăмăр эпир торгине, Дериганов унта, çитсе ларнă. Леонид Андреичăн мĕн пурри те вунпилĕк пин çеç, анчах Дериганов пĕр самантрах, парăм çине хушса хурса, вăтăра çитерчĕ хучĕ. Курап ĕнтĕ, ĕçсем ăçталла çаврăнса кайнине, тытăçса ўкрĕм те хайхипе, хĕрĕхе çитерсе хутăм. Вăл хĕрĕх пиллĕк. Эп аллă пиллĕк. Вăл ĕнтĕ пилĕкшерĕн хушса пырать, эп вуншарăн... Ну, пĕтрĕ вара. Парăм çине тăхăрвуннă хушса патăм та, ман çине юлчĕ. Халь ĕнтĕ чие сачĕ ман! Ман! (*Ахăлтатса кулать*). Турăçăм, господи, чие сачĕ ман! Калăр мана, ўсĕр, ухмаха ернĕ, ахаль çеç çапла пек туйăнать сана, тейĕр... (*Урисемпе тапăртатать*). Ан кулăр манран! Аттепе асатте тупăкĕсенчен тăрса пăхма пултарнă пулсан, хăйсен Ермолайĕ, патак çисе ўснĕ Ермолайĕ, хутла сахал пĕлекенскер, хĕллехи вăхăтра çара уран чупса çўрекен Ермолай, самăй çав Ермолай имени туяннине, тĕнчере çук илемлĕ имени туянса янине курма пултарнă пулсанччĕ. Эп имени туянтăм, вăл именире ман асаттепе атте тарçăра пурăннă, вăл именире вĕсене кухня çывăхне те яман. Эп çывăрап, тĕлленеп çеç вĕт эп кăна, ахаль çеç çапла туйăнать мана... Сирĕн

шухăшăран çимĕçĕ çеç вĕт-ха ку, тавçăрса илме çук тĕксĕмлĕхпе хупланнă çимĕç... (*Йăл-л кулса, çĕрте выртакан çăраççисене илет*). Çăраççисене пăрахса хăварчĕ, хăй кунта текех хуçа маррине кăтартасшăн ĕнтĕ... (*Çăраççисене чăнкăртаттарать*). Ну, пурĕпĕрех мар-и ара. (*Оркестр выляма хатĕрленнине илтĕнет*). Эй, музыкçăсем, выльăр, ман сире итлес килет! Пырса курăр, пурте пырса курăр, Ермолай Лопахин хăйĕн пурттипе чие садне каснине пырса курăр, йăвăççем çĕре ӳкнине курăр! Дачăсем туса тултарăпăр, пирĕн ачасен ачисем ку вырăнта çĕнĕ пурнăç курĕç... Музыка, выля!

Музыка вылять. Любовь Андреевна пукан çине тĕшĕрĕлсе аннă та хурланса йĕрет.

Лопахин (*ӳпкелешсе*). Мĕншĕн-ха, мĕншĕн итлемерĕр эсир мана? Мĕскĕн, ырă чунăм, халь тин каялла тавăрма çук ĕнтĕ. (*Куççулĕпе*). О, часрах иртсе кайтăрччĕ ку япала, улшăнтăрччĕ часрах пирĕн мĕнле те пулин çыпăçусăр, телейсĕр пурнăç.

Пищик (*ăна хулĕнчен çавăтса, çурма сасăпа*). Макăрать вăл. Кайăпăр зала, пĕччен хăварас ăна... Атя... (*Ăна хулĕнчен çавăтса, зала илсе тухса каять*).

Лопахин. Мĕн-ха ку? Музыка, уçăмлăрах выля! Пускай пурте эп тăвас тенĕ пек пул-

тăр! (*Мăшкăланăн кулса*). Çĕнĕ помещик, чие сачĕн çĕнĕ хуçи пырать! (*Асăрхаман çĕртен сĕтеле перĕнет, кăшт çеç канделябрсене тÿнтерсе яраймасть*). Пуриншĕн те тÿлеме пултаратăп! (*Пищикпе тухса каять*).

Залра та, хăна пÿлĕмĕнче те, **Любовь Андреевнăсăр** пуçне, никам та çук, вăл хутланса ларнă та çав тери хурланса йĕрет. Хуллен музыка вылять. **Аняпа Трофимов** хăвăрт утса кĕреççĕ. **Аня** амăшĕ патне утса пырать те ун умне чĕркуçланса ларать. **Трофимов** зал алăкĕ патĕнче тăрса юлать.

Аня. Анне!.. Анне, йĕретĕн-им мĕн эсĕ? Чунăм, чĕререн юратнă анне, ырă кăмăллă, савнă аннем, эп сана юрататăп... пиллетĕп сана. Чие садне сутса янă, çук ĕнтĕ вăл, чăнах, çапла вăл, тĕрĕс, анчах ан йĕр, анне, пурнăçу сан малалла-ха, сан ырă та таса чуну пур-ха, анне... Атя манпа пĕрле, атя, чунăм, каяр кунтан!.. Çĕнĕ сад лартса ÿстерĕпĕр, кунтан та илемлĕрех пÿлĕ вăл, курăн эс ăна, ăнланăн, сан чуну çине вара лăпкă та таса савăнăç анĕ, каç пулас умĕнхи хĕвел пекех илемлĕ пулĕ вăл, эс вара йăл-л кулса илĕн, анне! Каяр, чунăм! Каяр!

**Чаршав**

# ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

Пĕррemĕш актри декораци. Чӳречесем ҫинче занавескăсем те ҫук, картинсем те, кăштах сĕтел-пукансем тăрса юлнă, вĕсене те, сутма хатĕрлесе хунă пек, кĕтессе пуҫтарса хунă. Пӳлĕм пушанса юлни сисĕнет. Тулалла тухмалли алăк патĕнче ҫула кайма хатĕрлесе хунă ҫыхăсем т. ыт. те купаланса выртаҫҫĕ. Сулахайри алăк уҫă, унтан **Варяпа Аня** сасси илтĕнет. **Лопахин** кĕтсе тăрать. **Яша** шампански тултарнă пĕчĕкҫеҫ стакансене подноспа тытса тăрать. Малти пӳлĕмре **Епиходов** ещĕксене ҫыхать. Сцена хыҫĕнче шавланă сасăсем илтĕнеҫҫĕ. Кусем сывпуллашма килнĕ мужиксем. **Гаев** сасси: „Спасибо, тăвансем, спасибо сире".

Я ш а. Халăх сывпуллашма килнĕ. Ман шухăшпа, Ермолай Алексеич, халăх ырă кăмăллă, анчах сахал ăнланать.

> Шавлакансем лăпланаҫҫĕ. Малти пӳлĕм витĕр **Любовь Андреевнăпа Гаев** кĕреҫҫĕ; **Любовь Андреевна** макăрмасть, анчах вăл шурса кайнă, пичĕ унăн чĕтрет, вăл калаҫма пултараймасть.

Г а е в. Эс вĕсене укҫа хутаҫҫи парса ятăн пулать, Люба. Юрамасть апла! Юрамасть!

Любовь Андреевна. Чăтаймарăм эп! Чăтаймарăм! (*Иккĕш те тухса каяççĕ*).

Лопахин (*алăкран тухса кайнă чухне вĕсене чĕнет*). Килĕрех, иртĕр кунталла! Çул çине кайнă май пĕрер стакан ĕçсе парăрсам ĕнтĕ. Хуларан илсе килме ăс çитмерĕ, станцире ав, мĕн пурри те пĕр бутылка çеç тупрăм. Килĕрех, иртĕр! (*Пауза*). Мĕн-ха, господа! Ĕçес теместĕр-им? (*Алăк патĕнчен каять*). Пĕлнĕ пулсан—илместĕмччĕ. Апла пулсан эппин, эп те ĕçместĕп. (*Яша подносне пукан çине ерипен лартать*). Эс ĕçсе пар хăть, Яша.

Яша. Çула каякансемшĕн! Телейлĕ пулса юлăр эппин! (*Ĕçет*). Чăн-чăн шампански мар ку сирĕн, ĕнентерме пултаратăп.

Лопахин. Бутылки сакăр тенкĕ. (*Пауза*). Шуйттан пек сивĕ кунта.

Яша. Хутман паян, пурĕпĕр каятпăр. (*Кулать*).

Лопахин. Мĕн эсĕ?

Яша. Кăмăл тулса çитнипе.

Лопахин. Тулта октябрь, анчах çанталăкĕ хĕвеллĕ, тӳлек, çуллахи пек. Çуртйĕр çавăрма аван. (*Сехет çине пăхса илсе, алăк еннелле*). Господа, астăвăр, поезд килесси мĕн пурри те 47 минут çеç юлчĕ. Тепĕр çирĕм минутран станца каймалла, эппин. Васкарах парăр.

Трофимов, пальтопа, килкартинчен кӗрет.

Трофимов. Ман шухӑшпа, кайма та вӑхӑт ҫитрӗ. Лашасем хатӗр. Чорт пӗлет-и тен, ӑҫта ман калушсем. Ҫухалчӗҫ. (*Алӑкалла*). Аня, ҫук ман калушсем! Тупаймарӑм!

Лопахин. Ман Харькова каймалла. Сирӗнпе пӗрлех пӗр поезд ҫинех ларса пырап. Харьковра хӗл каҫап. Ялан сирӗнпе сӗтӗренсе ҫӳресе, ӗҫсӗр аптрарӑм, асап. Ӗҫсӗр пултараймастӑп, пӗлместӗп, алӑсемпе мӗн тумалла-ши ӗнтӗ; те-ек сулланса ҫӳреҫҫӗ, ют алӑсем пек.

Трофимов. Халех каятпӑр, эсир вара каллех хӑвӑрӑн усӑллӑ ӗҫӗре тытӑнма пултаратӑр.

Лопахин. Ӗҫ-ха пӗр стакан.

Трофимов. Ӗҫместӗп.

Лопахин. Халь Мускава эппин?

Трофимов Хулана ӑсатап та вӗсене, ыран вара Мускава.

Лопахин. Апла эппин... Профессорсем лекци те вуламаҫҫӗ пуль-ха, те-ек эс пырасса кӗтеҫҫӗ пуль!

Трофимов. Сан ӗҫ ҫук унта.

Лопахин. Миҫе ҫул вӗренен-ха эс ҫав университетра?

Трофимов. Мӗн те пулин урӑххине, ҫӗнӗреххине шухӑшласа кӑлар. Кивелнӗ ӗнтӗ вӑл, ытлашши якалса кайнӑ. (*Калушне шы-*

*рать*). Пĕлетĕн-и, пĕр-пĕрне текех кураймастпăр пуль ĕнтĕ эпир, çавăнпа та, сывпуллашнă ячĕпе, хăвна пĕр канаш пама ирĕк пар эс мана: аллусене ан сулкала! Пăрах вăл алăсене сулкалас йăлана. Дачăсем тăвас ĕçе те пăрахас пулать, дачниксенчен хăçан та пулин уйрăм хуçасем пулса тăрассине те шанма кирлĕ мар, апла пуласса шанни вăл — аллусене сулкаланиех пулса тăрать... Кирек мĕнле пулсан та, сана эпĕ пурĕпĕр юрататăп. Пӳрнӳсем сан çинçе, ачаш, артисăнни пек, чуну та çинçе сан, ачаш чунлă эсĕ...

Лопахин (*Трофимова ыталать*). Сывă пул, ачам. Спасибо пуриншĕн те. Кирлĕ пулсан, çул çине валли укçа илсе кай. Парса ярăп.

Трофимов. Мĕн тума мана? Кирлĕ мар.

Лопахин. Çук вĕт-ха сирĕн!

Трофимов. Пур. Тавтапуç сире. Эп куçарнăшăн илтĕм. Акă вăл, кĕсъерех. (*Пăлханса*). Анчах калуш çук ман!

Варя (*тепĕр пӳлĕмрен*). Мейĕр ак лапăрчăк калушăра! (*Сцена çине пĕр мăшăр калуш кăларса ывăтать*).

Трофимов. Мĕншĕн çиленетĕр çак эсир, Варя? Ăм... Ара, ман мар вĕт ку калушсем!

Лопахин. Çуркунне эп пин теçеттин мăкăнь акса хăвартăм, халь акă хĕрĕх пин шăнкăрт укçан ĕçлесе илтĕм. Ман мăкăнь, чече-

ке ларнă чухне пуласчĕ сан, ну-и картина, калама çук! Çапла вĕт эп, калап-çке-ха, хĕрĕх пин ĕçлесе илтĕм, çавăнпа ĕнтĕ эп сана кивçен сĕнетĕп, мĕншĕн тесен пама пултаратăп. Мĕншĕн сăмсана каçăртмалла вăл? Эпĕ мужик... мăнкăмăллă мар.

Трофимов. Сан аçу мужик пулнă, ман— аптекарь, анчах вăл ниме те пĕлтермест. (*Лопахин бумажникне кăларать*). Ан тив, кирлĕ мар... Хăть эс мана икçĕр пин пар, çавах илместĕп. Эп ирĕклĕ çын. Эсир çав тери хакла хуракан япаласем, сирĕншĕн, пуянсемпе ыйткалакансемшĕн, пуриншĕн те, çавтери хаклă та çӳлте тăракан япаласем, маншăн пулсан нимĕн те мар, нимĕнле власть та çук вĕсен, маншăн вĕсем сывлăшра вĕçсе çӳрекен мамăксем çеç. Сирĕнсĕрех пурăнма пултаратăп эпĕ, сирĕн умăртан çаврăнса пăхмасăрах иртсе кайма пултаратăп, эп вăйлă, мăнкăмăллă. Этемлĕх чи çӳлте тăракан чăнлăх патне, çĕр çинче пулма пултаракан чи пысăк телей патне утать, а эпĕ пĕрремĕш ретсенче!

Лопахин. Çитейĕн-ши?

Трофимов. Çитетĕп. (*Пауза*). Çитетĕп, хам çитеймесен, урăххисене çитме пулăшăп, çул кăтартса парăп.

Инçетре пуртăпа йăвăç каснă сас илтĕнет.

Л о п а х и н. Ну, сывă пул, ачам. Кайма вăхăт. Эпир ав, пĕр-пĕрин умĕнче сăмсасене каçăртса çӳретпĕр, анчах пурнăç хăйне май иртсех пырать. Нумай ĕçлесе те ывăнман чухне вара, шухăшсем çăмăлрах пек, ун пек чухне мана та хам мĕншĕн пурăнни паллă пек туйăнать. Анчах харпăр хăй мĕншĕн пурăннине пĕлменнисем мĕн чухлĕ. Мĕн чухлĕ вĕсем Российăра. Ну, пурĕпĕр, ĕç улшăнса пырасси унтан килмест. Леонид Андреич вырăна кĕнĕ, теççĕ, банкра пулать, тет, çулталăка ултă пин... Анчах чăтса лараймĕ çав, кахал питĕ...

А н я (*алăкра*). Анне сире садри йăвăççене хăй тухса кайсан тин касма ыйтать.

Т р о ф и м о в. Чăнах та, неушлĕ çавна та чухламалла мар... (*Малти пӳлĕм витĕр тухса каять*).

Л о п а х и н. Халех, халех... Эккея сирĕнпе. (*Ун хыçĕнчен тухса каять*).

А н я. Фирса больницăна леçрĕç-и?

Я ш а. Ирхине каларăм эп. Леçрĕç пулмалла.

А н я (*зал урлă иртсе каякан Епиходова*). Семен Пантелеич, кайса пĕлĕр-ха, тархасшăн, Фирса больницăна илсе кайнă-и?

Я ш а (*кăмăлсăрланса*). Ирхине Егора каларăм эпĕ. Мĕн вуншар хут ыйтмалли пур!

Е п и х о д о в. Нумай çул хушши пурăннă Фирс, манăн татăклă шухăшăмпа, юсаттарма

юрăхсăр, асаттесен аслашшĕсем патне каймалла ун. А эп çакна хапсăнма кăна пултарап. (*Чемоданне шлепке хумалли картон коробка çине лартать, коробка лапчăнать*). Ну, вăт, пĕтрĕ те. Каларăм çапла пулать тесе. (*Тухса каять*).

Яша (*мăшкăларах кулса*). Çирĕм икĕ инкек...

Варя (*алăк тулашĕнче*). Фирса больница леçрĕç-и?

Аня. Леçсе хăварчĕç.

Варя. Мĕншĕн тухтăр патне çыру илсе каймарĕç?

Аня. Апла пулсан хыçалтан чуптарас... (*Тухса каять*).

Варя (*юнашар пӳлĕмрен*). Яша ăçта? Калăр-ха, ăна амăшĕ килне кайиччен курса юлас, тет.

Яша (*аллипе сулса*). Тарăхтарма çеç вĕсем.

> **Дуняша** пĕрмаях яшаласем патĕнче хыпкаланса çӳрет; халь ĕнтĕ, **Яша** пĕччене тăрса юлсан, вăл ун патне пырать.

Дуняша. Пĕрре те пулин пăхса илесчĕ хуть, Яша. Эсир каятăр... мана пăрахса хăваратăр... (*Макăрать, ун çине ыткăнса мăйĕнчен ыталаса илет*).

Яша. Мĕн макăрмалли пур-ха? (*Шампански ĕçет*). Тепĕр ултă кунран эп каллех Парижра.

Ыран ак, курьерски поезд çине ларатпăр та яра паратпăр, курса юлма ёлкĕр. Темле ёненес те килмест. Вивла Франс!.. Кунти пурнăç маншăн мар, пултараймастăп пурăнма... Нимĕн те тăваймăр. Курса тăрантăм тĕшмĕшлĕхе—çитет мана. (*Шампански ĕçет*). Мĕн макăрмалли пур? Хăвăра хăвăр йĕркеллĕ тыткалăр, вара макăрма та чарăнатăр.

Д у н я ш а (*тĕкĕр çине пăхса питне пудра сĕрет*). Парижран çыру ярăр. Юратнă вĕт эп сире, Яша, çав тери юратнă! Эпĕ ачаш чун, Яша!

Я ш а. Кунта килеççĕ. (*Чемодансем патĕнче хыпкаланма пуçлать, шăппăн юрлать*).

**Любовь Андреевна, Гаев, Аня** тата **Шарлотта Ивановна** кĕреççĕ.

Г а е в. Каясчĕ пирĕн. Нумай юлмарĕ ĕнтĕ. (*Яша çине пăхса*). Камран вăл селедка шăрши кĕрет!

Л ю б о в ь  А н д р е е в н а. Тепрер вунă минутран ĕнтĕ экипажсем çине ларăпăр... (*Пӳлĕме пăхса çаврăнать*). Сывă пул, савнă çуртăм, ватă асатте. Хĕл иртет акă, çуркунне çитет, кайран вара, эс çук пулан, сана пăсаççĕ. Мĕн-мĕн курман-ши çак стенасем! (*Хĕрне хĕрӳллĕн чуптăвать*). Ылттăнăм, йăлкăшан иккен, куçусем сан икĕ алмаз пек выляса тăраççĕ. Çав териех кăмăлларăн-им эс? Килĕшрĕ-им?

Аня. Çав тери! Çĕнĕ пурнăç пуçланать, анне!

Гаев (*хаваслăн*). Чăнахах та, халь ĕнтĕ пурте аван. Чие садне сутса яриччен эпир пурте пăлханаттăмăр, асапланаттăмăр, анчах кайран, ыйтăва яланлăхах татса хурсан вара, пурте лăплантăмăр, савăнăçлăрах пула пуçларăмăр тата... Эп банкри служащи, халь ĕнтĕ эп финансист... саррине варне; эсĕ те, Люба, хуть мĕнле пулсан та, сăн кĕре пуçлана сана, ун пирки иккĕленмелли те çук.

Любовь Андреевна. Çапла. Нервсем юсăнма пуçларĕç ман, вăл тĕрĕс. (*Ăна пальтопа шлепке параççĕ*). Аван çывăратăп эпĕ. Ман япаласене илсе тухăр, Яша. Вăхăт ĕнтĕ. (*Аняна*). Хĕрĕм, эпир пĕр-пĕрне часах курмăпăр... Эп Парижа каятăп, унта эп сан Ярославльри асаннӳ имени илме ярса пана укçапа пурăнăп—сывă пултăр асанне!—анчах укçи вăл нумая пырас çук та.

Аня. Анне, час килен вĕт эс, пит час килен... çапла мар-и-мĕн? Эпĕ хатĕрленеп те, гимназире экзамен парап, унтан вара ĕçлеме, сана пулăшма пуçлап. Иксĕмĕр эпир тĕрлĕрен кĕнекесем вулăпăр... Тĕрĕс мар-и-мĕн? (*Амăшĕн аллисене чуптăвать*). Кĕрхи каçсенче вулăпăр эпир, нумай кĕнеке вуласа тухăпăр, вара пирĕн умма тĕлĕнмелле çĕнĕ тĕнче тухса тăрĕ... (*Шухăша каять*). Анне, таврăн...

Любовь Андреевна. Таврӑнап, ылттӑнӑм. (*Хӗрне ыталаса илет*).

Лопахин кӗрет. Шарлотта хуллен юрлать.

Гаев. Телейлӗ Шарлотта: юрлать!

Шарлотта (*чӗркесе хунӑ чӗчӗ ачи евӗр япала ҫыххине илет*). Пӗчӗкҫеҫ ачине, бай, бай... (*Ача макӑрни илтӗнет: уа, уа!..*). Ан шарла, чипер ачам, савнӑ чӗппӗм, ан шарла. (*Уа!.. Уа!..*). Ҫав тери шеллеп эп сана! (*Ҫыххине хӑй вырӑнне пӑрахать*). Вырӑн тупса парӑр эппин эсӗр мана, тархасшӑн. Капла пултараймастӑп эпӗ.

Лопахин. Тупӑпӑр, Шарлотта Ивановна, ан кулянӑр.

Гаев. Пурте пӑрахса каяҫҫӗ пире, Варя каять... труках кирлӗ мар пултӑмӑр эпир.

Шарлотта. Хулара ниҫта пурӑнма та ҫук ман. Каймалла пулать... (*Юрлать*). Пурӗпӗр...

**Пищик** кӗрет.

Лопахин. Ҫутҫанталӑк тӗлӗнтермӗшӗ!..

Пищик (*хашкаса*). Ой, сывлӑш ҫавӑрма парӑр... халран кайрӑм... Сывлӑх сунатӑп сире... Шыв парӑр...

Гаев. Каллех укҫа патне-и? Тавтапуҫ сире, ҫылӑхран пӑрӑнам-ха... (*Тухса каять*).

Пищик. Чылай пулать сирӗн пата килменни... чипер пикеҫӗм... (*Лопахина*). Эс кунта...

хавас сана курма... Çав тери пысăк ăслă этем... акă... ил... (*Лопахина укçа парать*). Тăватçĕр тенкĕ... Ман сана тата сакăрçĕр хĕрĕх памалла...

Лопахин. (*Тĕлĕннипе хулĕсене хутлатать*). Тĕлĕкри пек... Ăçтан тупрăн куна эсĕ?

Пищик. Тăхта... Тўсме çук шăрăх... Тĕлĕнмелле... Сайра пулать ун пекки. Англичансем пычĕç те ман пата, ман çĕр çинче темскерле шурă тăм тупрĕç... (*Любовь Андреевнăна*). Сире те тăватçĕр... чипер пикеçĕм... тĕлĕнмелле пикеçĕм... (*Укçине парать*). Ыттине кайран. (*Шыв ĕçет*). Халь вагон çинче пĕр çамрăк çын каласа килчĕ, пĕр чаплă философ... темлескер-çке, пўрт тăрринчен сикме сĕнет, тет... „Сик!" тесе калать, тет, пĕтĕм задача çавă пулать, имĕш. (*Тĕлĕнсе*). Шухăшлăр-ха эсир! Шыв!..

Лопахин. Мĕнле англичансем-ха вĕсем? Э?

Пищик. Эп вĕсене çав шур тăмлă участока тара патăм... 24 çуллăха... Анчах халь, каçарăр, ершместĕп... малалла чуптарас пулать... Знайков патне... Кардамонов патне кĕрсе тухмалла... Пурне те тўлемелле... (*Ĕçет*). Сирĕн сывлăхăршăн... Кĕçнерникун кĕрсе тухăп...

Любовь Андреевна. Халь эпир хулана куçатпăр, ыран эп ют патшалăха...

Пищик. Мĕнле? (*Пăлханса*). Мĕншĕн хулана? Э-э, çавăнпа-иç... сĕтел-пукансем çине пăхатăп та эпĕ... чемодансем... Ну нимех те мар... (*Куççуль витĕр*). Ничево... Çав тери ăслă çынсем... çав англичансем... Нимех те мар... Телейлĕ пулăр... Турă пулăшĕ сире... Ничево... Ку тĕнчере пурте пĕтет... Пурин те вĕçĕ пур... (*Любовь Андреевна аллине чуптăвать*). Эп вилни çинчен сас-хура мĕн илтĕнсен, ак çак лашана аса илĕр те: „çут тĕнчере ун пек кун пек çын пурччĕ... Симеонов-Пищик... çӳлти патшалăх пултăр ăна", тейĕр... Çанталăкĕ пит аван... Çапла... (*Нимле мар пулса тухса каять, анчах çав хушăрах каялла таврăнать те, алăкра чарăнса*). Дашенька сире салам калама хушрĕ! (*Тухса каять*).

Любовь Андреевна. Халь кайма та юрать ĕнтĕ. Кайсан та икĕ хуйхă пулать. Пĕри вăл—Фирс чирленĕ пирки. (*Сехет çине пăхса*). Тепĕр пилĕк минут тăхтасан та...

Аня. Анне, Фирса больницăна леççе хăварчĕç. Паян ирхине Яша леççе хăварчĕ.

Любовь Андреевна. Иккĕмĕш хуйхă ман—Варя. Вăл ирех тăрса ĕçлеме вĕреннĕ, халь ав, ĕç çук пирки, шывсăр антракан пулăпа пĕрех асапланать. Йăлтах начарланса, шурса кайрĕ, макăрать мĕскĕн... (*Пауза*). Эсир аван пĕлетĕр, Ермолай Алексеич; эпĕ

ӑна сире... качча пама ӗмӗтленсе пурӑнтӑм, пур енчен пӑхсан та курӑнатчӗ эсир авланасси. (*Аняна пӑшӑлтатса темскер калать, лешӗ Шарлотта ҫине пӑхса пуҫӗпе сулса илет те, иккӗш те тухса каяҫҫӗ*). Вӑл сире юрататать, эсир те ӑна килӗштеретӗр, пӗлместӗп, пӗлместӗп ӗнтӗ, мӗншӗн-ха эсир пӗр-пӗринчен пӑрӑнса ҫӳренӗ пек хӑтланатӑр. Ӑнланаймастӑп!

Лопахин. Тӗрӗссипе каласан, эп хам та ӑнланаймастӑп. Ӑнланмалла мар темле... Вӑхӑчӗ пур пулсан, эпӗ, халь тесен, халь хатӗр... Труках пӗтерсе хурӑпӑр та—ӗҫӗ те пӗтрӗ; а сирӗнсӗр пуҫне, сисетӗп эпӗ, качча пырас кӑмӑлӑр пур-и, тесе ыйтмастӑп.

Любовь Андреевна. Питӗ аван. Пӗр минут ҫеҫ кирлӗ вӗт-ха. Эп ӑна халех чӗнеп...

Лопахин. Ҫитменне шампански те пур. (*Стакансем ҫине пӑхса илсе*). Пушӑ, такӑшӗ ӗҫсе те янӑ. (*Яша ӳсӗрет*). Ланкӑртаттарса янӑ, тес пулать ӗнтӗ куна...

Любовь Андреевна (*хавасланса*). Пит аван. Эпир тухӑпӑр... Яша, allez! Эп ӑна чӗнем-ха. (*Алӑк витӗр*). Варя, пӑрах-ха эс унта, кил кунта. Кил! (*Яшӑпа пӗрле тухса каять*).

Лопахин (*сехечӗ ҫине пӑхса*). Да... (*Пауза*).

Алӑк хыҫӗнче асӑрханарах кулни, пӑшӑлтатни илтӗнет, юлашкинчен **Варя** кӗрет.

Варя (*чылайччен япалисене çавăркала-çавăркала пăхать*). Тĕлĕнмелле, ниепле те тупаймастăп...

Лопахин. Мĕн шыратăр çак эсир?

Варя. Хам чиксе хутăм та, астумастăп ĕнтĕ. (*Пауза*).

Лопахин. Халь ăçталла ĕнтĕ эсир, Варвара Михайловна?

Варя. Эп-и? Рагулинсем патне... Вĕсен хуçалăхне пăхса пурăнма калаçса татăлтăм... экономка пулап пулмалла.

Лопахин. Яшневăра-и? Пĕр 70 çухрăм пулать унта. (*Пауза*). Вăт пурнăç пĕтрĕ те ĕнтĕ ку çуртра...

Варя (*япаласене çавăркаласа пăхать*). Ăçта-ха вăл... Те арчана чиксе хутăм эп ăна... Çапла çав, пурнăç пĕтрĕ ку çуртра... текех пулмасть ĕнтĕ вăл...

Лопахин. А эпĕ халь Харькова каятăп... ак çак поездпа. Ĕç нумай. Кунта Епиходова хăваратăп... Эп ăна тара тытрăм.

Варя. Пулин!

Лопахин. Пĕлтĕр ку вăхăтра юр çăватчĕ, астăватăр пулсан, халь ав тӳлек, хĕвел пăхать. Анчах сивĕрех вĕт... Пĕр виçĕ градус пулать.

Варя. Пăхмарăм эпĕ. (*Пауза*). Градусникне те çĕмĕрсе пăрахнă та пирĕн... (*Пауза*).

Килкартинчен чĕннĕ сасă: Ермолай Алексеич!

Лопахин (*хăйне чĕнессе тахçанах кĕтнĕ пек*). Халех пырап! (*Хăвăрт тухса каять*).

Урайĕнче ларакан **Варя**, пуçне кĕпе çыххи çине хунă та, шăппăн ĕсĕклесе йĕрет. Алăк уçăлать, ерипен, асăрханса **Любовь Андреевна** кĕрет.

Любовь Андреевна. Мĕн? (*Пауза*). Каяс пулать.

Варя (*халь вăл макăрмасть ĕнтĕ, куçĕсене шăлса типĕтнĕ*). Çапла çав, аннеçĕм, кайма вăхăт ĕнтĕ. Эпĕ Рагулинсем патне паянах çитсе ĕлкĕреп, поездран юлас марччĕ...

Любовь Андреевна (*алăк витĕр*). Аня, тумлан!

Малтан **Аня**, унтан **Гаевпа Шарлотта Ивановна** кĕреççĕ. Гаев ăшă пальто тăхăннă, башлыкпа. Тарçăсем, извозчиксем кĕреççĕ. Япаласем патĕнче Епиходов хыпкаланса тăрать.

Любовь Андреевна. Халь ĕнтĕ çула тухма та юрать.

Аня (*савăнăçлăн*). Каятпăр!

Гаев. Тусăмсем, савнă тусăмсем, хаклă тусăмсем! Çак çурта ĕмĕрлĕхех пăрахса кайнă самантра шарламасăр чăтса тăрайăп-ши, сывпуллашнă ятпа хам ăшри сисĕмсем çинчен, çак самантра хам ăшра мĕнле сисĕмсем тăвăнса тăни çинчен каламасăр чăтса тăрăп-ши...

Аня (*йăлăнса*). Пичче!

Варя. Пиччеçĕм, кирлĕ мар.

Гаев (*салхуллăн*). Дуплетпа саррине варне яратăп... Шарламăп...

Малтан **Трофимов**, унтан **Лопахин** кĕрет.

Трофимов. Ну, мĕнле, господа, кайма вăхăт вĕт!

Лопахин. Епиходов, пальто пар!

Любовь Андреевна. Тепрер минут ларам-ха эпĕ. Çак пӳртри стенасем... маччасем мĕнлине халиччен нихăçан та курман пек, халь эп вĕсем çине ĕмĕтсĕрленсе, çавтери ачашшăн юратса пăхатăп...

Гаев. Астăватăп, эп улттăра чухне, троицă кун эпĕ ак çак чӳрече çине ларнă та, атте чиркĕве кайнине пăхса ларап...

Любовь Андреевна. Япаласене пурне те илтĕр-и?

Лопахин. Пурне те пулас. (*Пальто тăхăннă май, Епиходова*). Эсĕ, Епиходов, асту, пурте йĕркеллĕ пултăр.

Епиходов (*хăйăлтатакан сасăпа*). Ан кулянăр, Ермолай Алексеич!

Лопахин. Мĕн пулнă çак сан сассуна?

Епиходов. Халь шыв ĕçрĕм, темскер çăтса ятăм.

Яша (*йĕрĕнсе*). Киревсĕрлĕх...

Любовь Андреевна. Каятпăр—кунта вара пĕр чун та юлмасть...

Лопахин. Çитес çуркуннеччченех.

Варя (*çыхса хунă япаласем хушшинчен зонтик туртса кăларать. Зонтик туртса кăларнă чухне вăл такама хăмсарнă пек тăвать; Лопахин хăранă пек пулать*). Мĕн эсир, мĕн... Эп шухăшламан та.

Трофимов. Господа, айтăр тухар та экипажсем çине вырнаçса ларар... Вăхăт ĕнтĕ! Кĕçех поезд килет!

Варя. Петя, акă вĕсем, сирĕн калушăрсем, чемодан хыçĕнче. (*Куççулĕпе*). Ытла та вараланчăк-çке вĕсем сирĕн, кивĕ...

Трофимов (*калушне тăхăнса*). Кайрăмăр, господа!

Гаев (*кĕç-вĕç макăрса ярасран хăраса*). Поезд... станци... Круазе—варрине, шуррине дуплетпа кĕтессе...

Любовь Андреевна. Карăмăр!

Лопахин. Пурте кунта-и? Никам та çук-и унта? (*Сулахай енчи алăка питĕрет*). Кунта япаласем хунă, питĕрес пулать. Карăмăр!..

Аня. Сывă пул, кил-çуртăм! Сывă пул, кивĕ пурнăç!

Трофимов. Сывă-и, çĕнĕ пурнăç!.. (*Аньăпа пĕрле тухса каять*).

**Варя** пӳлёме кусӗпе пӑхса ҫавӑрӑнать те, васкамасӑр, тухса каять. **Яша** тата **Шарлоттӑпа** унӑн пӗчӗк йытти тухаҫҫӗ.

Лопахин. Ҫуркуннеччен, эппин. Тухӑр, господа... Тепре куриччен! (*Тухса каять*).

Любовь Андреевнӑпа Гаев иккӗшех юлаҫҫӗ. Вӗсем ҫакна ҫеҫ кӗтнӗ пулас, пӗр-пӗрне ыталаса илсе йӗреҫҫӗ, хӑйсем йӗнине кам та пулин илтесрен шикленеҫҫӗ, вӗсем шӑппӑн, хӑйсене пусарма тӑрӑшса йӗреҫҫӗ.

Гаев (*ӑнран каяс вӗҫне ҫитсе*). Йӑмӑкӑм, йӑмӑкӑм...

Любовь Андреевна. О, ман савнӑ садӑм!.. Ачаш та илемлӗ садӑм!.. Пурнӑҫӑм, ҫамрӑклӑхӑм, телейӗм, сывӑ пул!.. Сывӑ пул!..

Аня сасси (*савӑнӑҫлӑн чӗннӗ пек*). Анне!..

Трофимов сасси (*савӑнӑҫлӑн, хаваслӑн*). Ау!..

Любовь Андреевна. Юлашки хут стенасем ҫине, чӳречесем ҫине пӑхса илем... Ку пӳлӗмре ман ҫӗр айне кӗрсе выртнӑ анне ҫӳреме юрататчӗ.

Гаев. Йӑмӑкӑм, йӑмӑкӑм!..

Аня сасси. Анне!

Трофимов сасси. Ау!

Любовь Андреевна. Эпир тухатпӑр!.. (*Тухса каяҫҫӗ*).

Сцена пушă. Пур алăксене те çăрасемпе питĕрни тата экипажсем тапранса кайни илтĕнет. Шăп. Шăплăхра пуртăпа йăвăç каснă сасă илтĕнсе каять, вăл сасă уçăмсăр, текех пĕрешкел, хурланчăклăн янăрса тăрать.
Ура сассисем илтĕнеççĕ. Сылтăм енчи алăкра **Фирс** курăнать. Вăл, яланхи пекех, пиджакпа, шурă жилеткăпа, уринче ун туфли. Вăл чирлĕ.

Фирс (*алăк патне пырса, алăк хăлăпне туртса пахать*). Питĕрнĕ. Кайнă... (*Диван çине ларать*). Ман çинчен маннă... Нимех те мар... эп кунта кăштах ларап та... Кĕрĕк тăхăнмарĕ вĕт çав Леонид Андреич, пальтопах тухса кайрĕ... (*Шухăша кайса ассăн сывлать*). Хам та пăхмарăм çав... Çамрăк-ха çав, симĕс! (*Темскер мăкăртатать, ăна ăнланма çук*). Ĕмĕрĕм те иртсе кайрĕ, пурăнманпа пĕрех... (*Выртать*). Выртам-ха.... Вăю та çук вĕт-ха сан, ним чухлĕ те юлман, нимĕн те... Эх, эс... пиçмен пашалу! (*Пĕр хускалмасăр выртать*).

Таçта инçетре, пĕлĕт çинче пекех, хĕлĕх татăлса кайнă чухнехи майлă сасă илтĕнет, вăл сасă пĕтсе-пĕтсе пырать, хурлăхлăн янăрать. Шăпланать. Инçетре, садра, пуртăпа йăвăç каснă сасă çеç илтĕнет.

Чаршав

Редактор С. В. ЭЛЬГЕР

Подписано
к печати 5 Марта
1941 г. Печатных листов 3,12.
Печатных знаков 39.360 в печат. листе.
Тираж 3000 экземпляров.
Заказ № 464.
НТ2597.

Типография № 2 Управления Издательств и Полиграфии при СНК ЧАССР, г. Алатырь.

Цена 2 р. 50 коп.

21180

А. П. ЧЕХОВ

# ВИШНЕВЫЙ САД

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
Чебоксары ◆ 1941